Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького

1937
ДЕКАБӖР
2
КӖҪНЕРНИКУН
275 (4787)-мӗш №

Пӗр №-рӗ 10 пус 19-мӗш ҫул тухать

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ЧӐВАШ КОММУНӖ

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ

Редакципе кантур адресӗ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактӑран 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

Декабӗрӗн 12-мӗшӗ—ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйламали кун

Хамӑр сасӑсене мухтавлӑ полководец Ворошилов йулташшӑн паратпӑр

МИНСК, ноябӗрӗн 30-мӗшӗ (ТАСС). Хулари суйлав участкисенче ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама Минск хула суйлав округӗ тӑрӑх регистрациленӗ тивӗҫлӗ кандидатшӑн, Оборонӑн йуратнӑ Наркомӗшӗн, Совет Союзӗн пӗррӗмӗш маршалӗ Климент Йефремович Ворошиловшӑн агитацилес ӗҫе анлӑн сарса йанӑ.

65-мӗш участкӑри суйлавҫӑсен вечӗрне Ворошилов йулташ йертсе пынӑ хӗрлӗгварди отрйачӗсенче пулнӑ ҫынсем пынӑ. Хӗрлӗ ҫарӑн Н-ски чаҫӗнчи политработник Василйев йулташ вечӗра пухӑннисене граджӑн вӑрҫин манмала мар епизочӗсем ҫинчен, аслӑ Сталин тата унӑн соратникӗ Ворошилов йертсе пынипе тунӑ Хӗрлӗ ҫарӑн чаплӑ похочӗсем ҫинчен каласа панӑ.

Хумханса хӑпарать трибунӑ ҫине килхуҫи хӗрарӑмӗ Коновалова йулташ.

— Револуциччен,—тет вӑл,—килхуҫи хӗрарӑмӗ кайа йулнӑ, пусмӑрлӑ ҫын пулнӑ. Хӗрарӑм общӗствӑлӑ пурнӑҫа хутшӑнман. Пайан епӗ сире ҫакӑн пек пӗлтерме телейлӗ—килхуҫи хӗрарӑмӗ ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлама ытти пур ӗҫҫыннисемпе тӑрах активлӑ хатӗрленет. Епӗ, декабӗрӗн 12-мӗшенче хам саса пирӗн йуратнӑ ҫулпуҫӗн Сталин йулташӑн соратникӗшӗн—Оборонӑн хурҫӑ Наркомӗ Ворошилов йулташшӑн пама суйлав урни патне хамӑр хулан пур суйлавҫисемпе пӗрле пымала тивӗҫлӗ пулнишӗн тулли кӑмӑллӑ.

Хӗрлӗ ҫар ҫуртӗнче Минскри предприйатисенчи ҫамрӑк суйлавҫӑ-стахановецсен тата Минск гарнизонӗн чаҫӗсенчи ҫар ӗҫне тата политикӑна вӗренсе хатӗрленес ӗҫри отличниксен пухувӗ пулса иртнӗ.

Вечӗрта пулнисем хӑйсен чӗнсе каланинче Минскри ҫамрӑк суйлавҫӑсене тата гарнизонӑн ҫар чаҫесене хӑйсен сасӗсене Хӗрлӗ ҫарӑн чаплӑ полководецне Оборонӑ Наркомне, Совет Союзӗн маршалне—Климент Йефремович Ворошилова пама чӗннӗ.

(ТАСС).

М. М. Литвинов йулташ Ленинградри Петроградскипе Василеостровски районсенчи суйлавҫӑсен пухувӗнче сӑмах тухса каланӑ

Ноябӗрӗн 27-мӗшӗнче Ленинградри Петроградскипе Василеостровски районсенчи суйлавҫӑсен суйлав умӗнхи пухувӗнче ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама Петроградски суйлав округӗ тӑрӑх регистрациленӗ кандидат—йутҫӗршыв ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ М. М. Литвинов йулташ сӑмах тухса каланӑ.

ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутата суйлама унӑн кандидатурине палӑртнӑ Ленинградри организацисене тав туса, Литвинов йулташ хамӑр тӑван ҫӗршыв ҫирӗп ҫул хушшинче тунӑ пысӑк ҫитӗнӳсене, вӑл лӑпкӑ саманашӑн вӗҫне ҫитичченех тӳррӗн кӗрешнине паллӑ тунӑ.

Германипе Италин Испанири интервенци тата Йапонин Китайри агресси примерӗсене илсе, Литвинов йулташ, буржуалӑ-демократилӗ державӑсем йенчен ирсӗр агрессӑрсене ирӗк панипе агрессилӗ ҫӗршывсем агрессийе малала тӑсма ҫӗнӗ позицисем ҫӗнтерсе илни ҫинчен кӑтартса парать.

Литвинов йулташ ҫапла калать: агрессилӗ ҫӗршывсем хӑйсен економикӑлӑ рессурсӗсене питех те вӑйлӑн пӗтерсе шалтан начарланса йулчӗҫ, ҫавӑнпа вӗсем халӗ вӑрӑма тӑсӑлакан пысӑк вӑрҫа пуҫарма хӑйаймаҫҫӗ, хӑйсен агрессине малала тӑвассинче ирексӗрех ҫӑмӑлтараххӑн вӑрҫма майсем шыраҫҫӗ. „Епӗр пӗлетпӗр, — тет Литвинов йулташ, — ҫавнашкалах вӗсем те пӗлеҫҫӗ, ҫавӑн пек ҫӑмӑлтараххӑн вӑрҫма вӗсем пирӗн чикӗсенче тупаймаҫҫӗ. (Ала ҫупаҫҫӗ). Вӗсем пӗлеҫҫӗ, Совет Союзӗн оборонӑ пултарулӑхӗ пӗтӗм тӗнчери комбинацирен килмест, а Хӗрлӗ ҫарӑн, Хӗрлӗ флотӑн тата хӗрлӗ авиацин ҫирӗп ӳссе пыракан вӑйхӑватӗнчен килет. Вӗсем пӗлеҫҫӗ, пирӗн ҫулпуҫ Сталин йулташ пӗтӗм государствӑ механисӑмне тӗрӗс йӗркелессишӗн нумай тӑрӑшать, уйрӑмӑнах оборонӑ ыйтӑвӗсем ҫине, нимӗн тытса илме йураман тата никам та пирӗнтен тытса илме пултарайман кашни ҫӗр татӑкне сыхлас ыйту ҫине питӗ пысӑк тимлӗх хурать". (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Вӑрҫӑна хатӗрленни,—паллӑ тӑвать Литвинов йулташ,—йутҫӗршывсенче шпионла организацисем тата тӗрлӗ ӗҫсем тума нумай агентурӑсем йаниче пулать. Пирӗн тӑшмансем ку тӗлӗшпе те совет ҫӗршывӗнче ҫӑмӑлтараххӑн тумали йӗре тупма ҫукки ҫинчен пӗлмеле ӗнтӗ. Пирӗн Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗ троцкисла-фашисла тата сӑтӑрлӑ организацисене тӗпӗ тымарӗпех тӗп тума сыхӑ та вӑйлӑ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Хӑйӗн сӑмахне вӗҫлесе, Литвинов йулташ ҫапла калать:

„Аслӑ Совет пирӗн ҫирӗм ҫулхи ҫитӗнӳсене вӗҫлесе ҫирӗплетни пулӗ. Епӗ шанатӑп, вӑл ҫав вӑхӑтрах Совет Союзӗн пӗтӗм граждӑнӗсем тата халӑхӗсем тӑван ҫӗршыва тӗрлӗ тапӑнусенчен ҫирӗп сыхласа тӑма тата Ленин—Сталин ӗҫне, коммунисӑм тӑвас ӗҫе вӗҫне ҫитичченех туса ҫитерме пӗрлӗхлӗ пултарулӑ пулнин никам ҫӗнтерейми татчан сыхӑнма тӑрӑшнин тата пӗрлешнин демонстрацийӗ пулӗ". (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Мускав ӗҫҫыннисен суйлав умӗнхи массӑлӑ митингӗсем

Ноябӗрӗн 30-мӗшӗнче хӗрлӗ столицӑра Красно-Пресненски округӗнчи суйлавҫӑсен суйлав умӗнхи икӗ массӑлӑ митинг пулса иртнӗ. Вӑл митингсенче 150 пин ытла ӗҫҫынни пулнӑ.

Митингра сӑмах тухса калакансем суйлавҫӑсене хӑйсен сасӗсене хамӑр тӑван ҫӗршывӑн чи лайӑх ывӑлӗсемшӗн, аслӑ Сталинӑн ученикӗсемшӗн тата соратникӗсемшӗн—Союз Советне депутата суйлама Красно-Пресненски суйлав округӗнчен палӑртнӑ кандидатшӑн—ПСК(б)Партин Мускав Комитечӗн секретарӗ Н. С. Хрущов йулташшӑн тата Национальнӑҫсен Советне депутата суйлама Мускав хула суйлав округӗнчен палӑртнӑ кандидатшӑн—РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ Н. А. Булганин йулташшӑн пама чӗннӗ.

Митингсенче Н. А. Булганин тата Н. С. Хрущов йулташсем сӑмах тухса каланӑ, вӗсене суйлавҫӑсем ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илнӗ.

Митингра пулнисем пӗтӗм чунран хавасланса халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин йулташ патне саламлӑ ҫыру йама йышӑннӑ.

(ТАСС).

ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлама хатӗрлении

— Смоленскри суйлав участкисенче икӗ калаҫакан кино-передвижкӑ ӗҫлет. Хулан площӑдӗсенче „Как избиратель будет голосовать" йатлӑ фильм кӑтартаҫҫӗ.

— Харьков театрӗсен коллективӗсем ССР Союзӗн Аслӑ Совет суйлавӗ йачӗпе илемлӗ инсценировкӑсем, концертсем, скетчсем хатӗрленӗ. Вырӑс драмин театрӗ хӑйӗн акторӗсем ҫырнӑ „Выборы" ораторине хатӗрленӗ. Украинӑ капелли суйлавҫӑсене тӗрлӗ вӑйӑсем кӑтартма Харьков облаҫӗнчи колхозсене пӗр уйӑхлӑха тухса кайать.

— Мускаври Куйбышев йачӗпе тӑракан електрозавод цехӗсенче, кӑнтӑрлахи кану вӑхӑтӗнче, паллӑ естрадӑ мастерӗ Еммануил Каминка рабочисене кашни кунах Францири чаплӑ писател Анри Барбусӑн „Сталин" кӗнеки тӑрӑх композици вуласа парать. Ӑна рабочисем питӗ тимле итлеҫҫӗ.

— Починкӑ хулинчи (Смоленск облаҫӗ) комсомолецсем агитацилӗ тата ӑнлантарулӑ ӗҫе вӑйлӑн туса иртереҫҫӗ. Нумай пулмасть комсомолецсем-агитаторсем Сталин йачӗпе тӑракан колхозра колхозниксен кашни килне кӗрсе тухнӑ. Суйлавҫӑсемпе вӗсем суйлав техники ҫинчен калаҫнӑ.

(ТАСС).

М. А. Шолохов йулташ хӑйӗн суйлавҫисемпе тӗл пулни

НОВОЧЕРКАССК, ноябӗрӗн 30-мӗшӗ (ТАСС). Ноябӗрӗн 29-мӗшӗнче Новочеркасск суйлав округӗнчи икӗ пин ытла суйлавҫӑ индустри институтӗнче Союз Советне депутата суйлама палӑртнӑ хӑйсен кандидачӗпе Михаил Александрович Шолоховпа тӗл пулнӑ. Унӑн уҫӑ сӑмахне пысӑк тимлӗхпе итлене тата алӑ ҫупса темиҫе хутах чарнӑ.

Союз Советне депутата суйламали кандидат М. А. Шолохов йулташ ҫапла каланӑ:

„Йулташсем, пирӗн Аслӑ Совета депутата суйламали кандидатсен хаҫатсенче пичетлесе кӑларнӑ пур сӑмахсенче те халӑх хӑйсен суйлавҫисене шаннипе тулли кӑмӑллӑ пулнин туйӑмӗ йантрать. (Алӑ ҫупаҫҫӗ). Вӑл сисӗмлӗхе, йулташсем, епе те куртӑм. Анчах вӑл саккунлӑ тулли кӑмӑллӑх ҫумне манӑн, тата епӗ именнӗ, Донри суйлав округӗсенчен пӗрниче баллотировкӑна танипе савӑннӑ кӑмӑл хутшӑнать. Епӗ Дон ҫинче ҫуралнӑ, унта ӳснӗ тата вӗреннӗ, етем тата писатӗл пулнӑ тата хамӑран аслӑ коммунисла парти членӗ пулса веренсе ҫитӗннӗ. (Алӑ ҫупаҫҫе) Хамӑран аслӑ, пултарула тӑван ҫӗршывӑн патриочӗ пулса, епе тулли кӑмӑлпа калатӑп, хамӑн тӑван Дон крайӗн патриочӗ те пулса тӑратӑп. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Пирӗн тӑван ҫӗршыва 170 миллион ӗҫ халӑхӗ йуратать. 170 миллионран темиҫе пин мерзавец, политикӑла намӑссӑрланнӑ ҫын тупӑнчӗ пулсан—вӗсем пурте хӑйсемпе ҫеҫ мар, тӑван ҫӗкшывпа та сутӑ тунӑ троцкисла-зиновйевла-бухаринла ирсӗрсем, вӑл ҫынсӗм пире тӗлӗнтермеҫҫӗ, нихӑҫан пулман пек сивӗнтереҫҫӗ.

Дон казакӗсене, патша влаҫне хирӗҫ кӗрешекен Разин тата Пугачов бунтарсене ӳстерсе панӑскерсене, револуци ҫулӗсенче генералсем улталанӑскерсене, вырӑс ӗҫхалӑхӗпе вӑрҫтарнӑ.

Анчах, хӑйсен йӑнӑшне ӑнланса, казаксем шурӑ йухӑмран пӑрӑнчӗҫ тата халӗ ӗҫре больщевиксен партийӗ йертсе пынипе, хамӑр епохӑн генилӗ ҫынӗ—Сталин йулташ йертсе пынипе хӑйсен саваҫлӑ тата телейлӗ пурнӑҫне тӑваҫҫӗ.

Больщевиксен партии вӑйӗпе, хамӑран нумай нацилӗ аслӑ ӗҫ халӑхӗн вӑйӗпе епӗр хамӑр ҫӗршывран пуйан ҫӗршыв турӑмӑр. Епӗр промышлӗннӑҫ турӑмӑр. епер социалисӑмла пысӑк йалхуҫалӑхӗ турӑмӑр. Епӗр хамӑрӑн хуҫалӑх вӑйхӑватне кунран кунах ытларан та ытларах ӳстеретпӗр. Епӗр ӗнтӗ ҫын шучӗпе пурӑнма йуратакансемшӗн пуриншен те тутлӑ татӑк пулса тӑратпар. Фашиссем малтанхи пекех Украинӑна пирӗнтен уйӑрса илесси ҫинчен шухӑшлаҫҫӗ. Вӗсем немецсен ти мӗрленӗ атти Дон ҫӗрӗ ҫине пусас кун ҫинчен ҫӗнӗрен шухӑшлаҫҫӗ.

Анчах кунта, йулташсем, есӗр хӑвӑр пӗлетӗр, нимӗн те тухмасть. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Климент Йефремович Ворошилӑвӑн нумай пулмасть каланӑ сӑмахӗнчен хӑварах астӑватӑр, Херлӗ ҫара оборонӑ валли тунӑ, пирӗн ҫине тапӑннӑ чухне, ун чухне вара, Хӗрлӗ ҫар пӗтӗм тӗнчере чи вӑйлӑн тапӑнакан ҫар пулать. (Ала ҫупаҫҫӗ) Ҫавӑнпа вӗсен нимӗн те тухмасть.

Епӗ шухӑшлатӑп, йулташсем, хӑй вӑхӑтӗнче Краснов генерал тата ытти сутӑнчӑксем йанипе немецсен лашисем Дон шывне ӗҫнӗ пулсан, халӗ ӗнтӗ вӗсене пирӗн Совет Донӗнчен нихҫан та ӗҫме май пулмасть. Теплерен пирӗн ҫине тапӑнсан, теплерен фашиссем хӗҫпӑшалланса ҫапӑҫма пуҫлаҫҫӗ пулсан, урӑхла пулать—Хӗрлӗ ҫарӑн казак чаҫӗсен дон лашисем Рейнри шыва ӗҫӗҫ".

Шолохов йулташ хӑйӗн сӑмахне ҫапла пӗтерет:

„Сывӑ пултӑр епӗр чӗрере илсе ҫӳрекен йат, сывӑ пултӑр аслӑ Сталин". (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ, пӗтӗм ӑшран хавасланса „урра" кӑшкӑраҫҫе).

Горькири суйлавҫӑсен митингӗ

ГОРЬКИ, ноябӗрӗн 30 мӗшӗ (ТАСС). Ноябӗрӗн 30-мӗшӗнче хулан Первомайски площӗдӗнче питӗ пысӑк митинг пулса иртнӗ. Вӑл митингра Горьки—Сталински суйлав округӗнчи суйлавҫӑсем ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлама палӑртнӑ хӑйсен кандидачӗсемпе тӗл пулнӑ.

Митингра пулнисем Союз Советне депутата суйлама Горьки—Сталински суйлав округӗнчен палӑртнӑ кандидата Йу. М. Каганович йулташа тата Национальнӑсен Советне депутата суйлама Горьки суйлав округӗнчен палӑртнӑ кандидата В. П. Чкалов йулташа хӗрӳлӗ алӑ ҫупса саламланӑ. Каганович тата Чкалов йулташсем митингра сӑмах тухса каланӑ.

„Епӗ хамӑн сӑмаха,—тенӗ Чкалов йулташ,—есӗр мана Национальнӑҫсен Советне депутата суйлама кандидата палӑртса пысӑккӑн шаннӑшӑн тарӑнӑн тав тумасӑр пуҫлама та пултараймастӑп.

Есӗр шаннине епӗ хамӑн кулленхи ӗҫре таваратӑп. Епӗ льотчик-испытател пулса, хамӑр авиацине гӗнчипе чи лайӑх самольотсем парса тӗреклетме пӗтӗм вӑйпа пулӑшӑп, тесе шантаратӑп. Епӗ никам вӗҫсе пӑхман сывлӑш ҫулӗсем тӑрӑх пӗрре кӑна мар ҫӗнӗ сталинла маршрут хурса тухма шанатӑп. Епӗ, больщевикла парти членӗ, халӑхсен пӗтӗм тата пур тӗрлӗ тӑшмавӗсемпе тӑван ҫӗршыва сутакансемпе ҫирӗп, пӗр паркаланмасӑр, пӗр хӗрхенмесӗр кӗрешме пулатӑп.

Митинг Сталин йулташ патне саламла ҫыру йанӑ.

(ТАСС).

Кийевра Конституци кунне уйавлани

КИЙЕВ, ноябӗрӗн 30-мӗш (ТАСС). Совет Украини столицинче пурӑнакансем декабӗрӗн 5-мӗшне—аслӑ Сталинла Конституцине ҫирӗплетнӗ куна паллӑ тума пысӑк ҫӗкленӳпе хатӗрленеҫҫӗ.

Предприйатисенче, учреждениссенче, суйлав участкисенче, ҫав чаплӑ ӗҫ йачӗпе пухусем, калаҫусем, митингсем пулса иртеҫҫӗ.

Районри, фабрик - заводсенчи партилӗ ӗҫӗн кабинечӗсем выставкӑсем тӑваҫҫӗ, хулари предприйатисенче йатарласа нумай тиражлӑ хаҫатсем кӑлараҫҫӗ.

Декабӗрӗн 4 мӗшӗнче ӗҫрен тухнӑ хыҫҫӑн Кийеври ӗҫҫыннисен демонстрацийӗ пулать.

Декабӗрӗн 5-мӗшӗнче халӑхсен массӑлӑ гуляннийӗ пулать. Хулан тӗп магистралӗнче—Крешчатикра тата унта тухакан урамсенче массӑлӑ ташӑсем организацилеҫҫӗ. Балконсем ҫинче оркестӑрсем выляҫҫӗ, айалта сарлака проспектра — байаниссемпе массовиксем тӗрлӗ вӑйӑсем, массӑлӑ йурасем т. ыт. те организацилеҫҫӗ.

Хулари кинотеатрсенче, клубсенче, площӗдсенче тата урамсенче ССР Союзӗн Аслӑ Совет суйлавне ҫутатса паракан кӗске кинофильмсем тата чи лайӑх илемлӗ кинокартинӑсем кӑтартаҫҫӗ.

Испанири фронтсенче

Мадрид фронтӗнче фашисла ҫарсем ноябӗрӗн 28-мӗшӗнче Толедо хулинчен кӑнтӑр йенче республиканецсен позицийӗсене тытса илме хӑтланнӑ. Республикӑ ҫарӗсен пулемечӗсем вӑйлӑ пенипе тата динамитчиксем хӑватлӑ ҫапӑҫнипе, кӗске, анчах хайар ҫапӑҫу хыҫҫӑн, фашиссен атакисене сирсе пӑрахнӑ. Фашиссен, чылайах пысӑк ҫухатусем тӳссе, хӑйсен позицийӗсене таварӑнмала килнӗ.

Фашиссен авиацийӗ, Мадрид ҫине варвӑрла тапӑнусем тӑватмансқер, йулашки вӑхӑтра Мадрид провинцинчи мирлӗ йалсем ҫине чӑрсӑрлансах тапӑнать. Фашиссен самольочӗсем Оканьйа йалӗ ҫине (Мадридран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерех) ҫӗр бомбӑ ытла, вӑл хисепрен 17 бомбине госпиталь ҫине пӑрахнӑ. 20 ҫын вӗлернӗ, 63 ҫынна амантнӑ. Фашиссем Гвадалахара хули (Мадридран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнеле) ҫине те бомбӑсем пӑрахнӑ. 40 ҫын, пуринчен ытла хӗрарӑмсемпе ачасене вӗлернӗ.

(ТАСС).

Тӗп суйлав комиҫҫи членӗ Т. П. Шаповалова (Воронеж облаҫӗнчи „Большевик" колхоз колхозникӗсенчен)

(Союзфото).

Китайри вӑрҫӑ

Шанхай фронтӗнчи мӗн пур участкӑсенче Нанкина кайакан ҫулсем ҫинче хайар ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ.

Фронтӑн Ҫурҫӗр участкинче пӗр татти сыпписӗр вӑйлӑ ҫапӑҫусем Цзйан-Инь хули (Йанцзы йуханшыв хӗрӗнче), Йапони флотне Нанкина пыма Йанцзы йуханшывӗ тӑрӑх тӑвала хӑпарассине чарса тӑракан фортсем ҫывӑхӗнче пыраҫҫӗ. Йапонцӑсем питӗ пысӑк йышлине пӑхмасӑрах, китай ҫарӗсем пысӑк сийен курса Йапони ҫарӗсен йуханшыв ҫывӑхӗнчи ҫӗр ҫинчи тата сывлӑшри атакисене сирсе пӑрахаҫҫӗ. Китай пӗлтерӗвӗсем тӑрӑх, Китай авиацийӗ бомбӑсем пӑрахнипе Йапонин ҫичӗ ҫар карапне сийенленӗ. Пӗр карапне путарнӑ.

Шанхай—Нанкин чукунҫулӗ тӑрӑх ҫапӑҫусем Уси тата Чанчжоу станцисен районӗнче пыраҫҫӗ.

Нанкина ҫавӑрса илме тата Нанкина Хӗвеланӑҫ йенчен сыхлакан Китай ҫарӗсен тылне кӗме тӑрӑшса, Йапонцӑсем Таху кӳлливчен хӗвелтухӑҫнелерех пысӑк вӑйсене пухнӑ. Йапони ҫарӗсен пӗр колонни Нанкин—Ханчжоу (Чжец провинцин столици) автомобил ҫулӗ тӑрӑх тапӑнать. Вӑл колоннӑ Исин хули патне ҫывхарса пырать. Тепӗр колонни кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнеле ҫавӑрӑнса Аньхуей провинцинчи Гуанде хулине тытса илнӗ. Гуанде Нанкинран Кӑнтӑр-Хӗвелтухӑҫнеле 90 километртра ларакан Уху хулипе (Йанцзы йуханшыв хӗрӗнче) лайӑх шоссе ҫулӗпе ҫыхӑннӑ.

Ноябӗрӗн 29-мӗшӗнче Йапони самольочӗсем Анхуей провинцин ҫурҫӗр пайӗнчи Линби лӑпкӑ хули ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Кунта пӗр Китай салтакӗ те ҫук. Бомбӑ пӑрахнипе нумай халӑх вилнӗ.

Китай хаҫачӗсем пурте Нанкин гарнизонӗн командуйушчийӗ Тан Шен Чжи генерал халӑха чӗнсе каланине пичетлесе кӑларнӑ. „Епӗ тата манӑн ҫарсем,—тенӗ Тан Шен-Чжи генерал,—йе пурнатпӑр, йе Нанкинпа пӗрлех пӗтетпӗр. Епӗр пӗтсен, вӑл вара пирӗн тӑшманшӑн питӗ хаклӑ тӑракан ӗҫ пулать".

Ҫурҫӗр Китайри фронтсенче лару тӑру улшӑнмасӑрах тӑрать. Китайри партизансен отрйачӗсем Йапони ҫарӗсен тылӗнче пысӑк активлӑхпа кӗрешеҫҫӗ.

(ТАСС).

Францире фашисла заговор пирки следстви туни

Францири пичет пӗлтернӗ тӑрӑх, францири тӗрлӗ вырӑнсенче хӗҫпӑшал усрамали вӑрттӑн складсем тупнисӗр пуҫне, заговора хутшӑннисем, ухтарасран шикленсе пулас, кӑларса пӑрахнӑ хӗҫпӑшалсене, патронсем тултарнӑ михӗсене, обоймӑсене, пулемет лентисене т. ыт. те тупнӑ. Ухтарнӑ чухне артиллери снарйачӗсене те тупнӑ. Ҫавӑнтан ӗнтӗ заговор тунисен ҫӑмӑл хӗҫпӑшал ҫеҫ мар, артиллери орудийӗсем те пулни курӑнать. Заговор тунисем хӗҫпӑшал Германирен, Швейцарирен, Бельгирен, Италирен тата ытти ҫӗршывсенчен те илсе тӑнӑ.

Следстви влаҫӗсем заговоршчиксен шифр ключне тупнӑ. Ҫав ключ заговоршчиксенчен туртса илнӗ ҫекретлӑ документсене вулама кирлӗ. Туртса илнӗ документсем хушшинче заговоршчиксен списисем те пур.

Тулуза хулинче (Францин кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ йенче) фашисла пысӑк организацийе тупнӑ. Ҫав ҫар майлӑ, Германири фашиссен штурмовой отрйачӗсем йеверлӗ тунӑ организаци вӑрттӑн майпа хӗҫпӑшал кӳрес тӗлӗшпе ӗҫленӗ. Вӑл хӑй умне Францин кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ пайӗнче хӗҫпӑшаллӑ восстани пуҫарса йарас задачӑ, Испанири фашиссем, троцкиссен „ПОУМ" организацийӗпе тата хӑшпӗр анархиссемпе пӗрле, Каталонире хатӗрленӗ пӑлхава пулӑшас задачӑ лартнӑ. Ҫапла вара, Францири фашиссем хатӗрленӗ пӑлхав пӗр вӑхӑтрах Францири халӑх фронтне хирӗҫ тата республикӑла Испанийе хирӗҫ пулмала пулнӑ.

Францири пичет—фашисла заговорӑн тӗп штабӗ Германи территорийӗнче, тесе ҫырать.

(ТАСС).

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Совет халăхĕ социалисăмла ҫĕршывăн чаплă патриочĕсемшĕн сасăлат̌

Кӳкеҫ поҫолкинчи суйлав участкинче

Кӳкеҫ поҫолкинчи суйлав участкине Карантайкасси, Сырмапуҫ, Патирек йалĕсем кĕреҫҫĕ. Кунта пĕтĕмпе 520 суйлавҫă. Декабĕрĕн 12-мĕшĕ тĕлне кашни суйлавҫăн суйлав округĕнче баллотировкăна тăракан кандидатсен йачĕсене, вĕсен пурнăҫĕпе ĕҫĕсене, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенипе тĕплĕн пĕлсе тăмала. Ҫакă вăл хаԓхи вăхăтра суйлав участкинчи агитацилĕ-пропагандăлă ĕҫе кашни кун туса пыма кирлине пĕлтерет. Хаԓхи вăхăтра кашни суйлавҫăпа ĕҫлемеле.

Кунти агитаторсем пачах ĕҫлемеҫҫĕ тени тĕрĕсех пулмĕ. Вĕсем ĕҫлеҫҫĕ, анчах ҫителĕксĕр. Соснов агитатор пуԓницăра ĕҫлекенсемпе пĕр заҥати ирттернĕ хыҫҫăн чарăнса ларнă. Алексейова агитаторăн столовăйĕнче ĕҫлекенсемпе ĕҫлемеле, вăл пĕр калаҫу та ирттермен. Вăтам шкулти Н. К. Кузьмин учителе Ҫырмапуҫĕнчи колхозра ĕҫлеме хушнă. „Епĕ ҫĕнĕ суйлав саккунне виҫĕ заҥатире ăнлантарса панă" тет вăл. Анчах мĕнле ăнланнă? Кунта кружок тавраш туман, ҫăмăл ĕҫ ҫине тăнă. Заҥати пулас кун пур колхозниксене те пĕр ҫĕре пухăнма хушаҫҫĕ. Кунта пĕтĕмпе 80 суйлавҫă ытла. Заҥатисене 22—23 ҫынтан ытла пухăнмаҫҫĕ: „Ҫĕнĕ суйлав саккунне вĕренсе пĕтернĕ" тени тĕрĕс мар. Мĕншĕн тесен 60 ҫынна йахăн суйлавҫăсене ку ĕҫе вуҫех хутшăнтарман.

Кӳкеҫ поҫолкинчи суйлав участкинче килхуҫи арăмĕсем 15 ҫынна йахăн. Вĕсене вĕрентме С. А. Сапун учителницăна хушнă. Вăл вĕсемпе 4 заҥати туса ирттернĕ. Малтанхи заҥатисенче вунă ҫын пулнă, иккĕмĕшĕнче—8, виҫҫĕмĕшĕнче 5, йулашки заҥатире 3 ҫын ҫеҫ пулнă. Кириллова, Воробйова йулташсен ачисем чирленĕ, Илйинапа Гринова килхуҫи арăмĕсем пĕчĕк ачасем пур пирки заҥатисене пыраймаҫҫĕ. Ҫавăнпа та кун пек килхуҫи арăмĕсене кваторĕсене кайса вĕрентмеле.

— Килхуҫи арăмĕсем патне килĕсене кайса вĕрентме те йурат̌-и вара? Ку питĕ лайăх. Тахҫанах ҫакăн пек тумала пулнă мĕн, тесе тĕлĕнет Сапун агитатор.

Сталинла Конституци хутла пĕлменнисене, суккăрсене те Аслă Совета суйлама права панă. Участкăра хутла пĕлменнисем, суккăрсем миҫе ҫын пурри ҫинчен участкăри суйлав комиҫҫин председателĕ Миронов йулташ та, агитаторсем те калаҫа пама пултараймаҫҫĕ. Анчах, паллă, Ҫырмапуҫĕнче суккăрисем 3 ҫын пур, вĕсене никам та вĕрентмест. Унтах хутла вуҫех пĕлменнисем 11 ҫын, хутла сахал пĕлекенсем 4 ҫын. Вĕсене вĕрентме Кузьминпа Дмитрийева учителсене уйăрнă. Заҥатисене 8—9 ҫынтан ытла пухăнмаҫҫĕ. Хăш чух 4—5 ҫынпах заҥатисем ирттеҫҫĕ. 6 ҫын пĕр заҥатире те пулман.

Округсенчи суйлав умĕнхи канашлусенче довереннăйсем суйласа, вĕсене суйлав участкисенче агитацилĕ-пропагандăлă ĕҫ тума хушнă. Участкăри доверенăй Йегор Сергейева суйлав участкинче курма ҫук. Суйлавҫăсем Чкалов, Сахйанова, Андрейĕвă пурнăҫĕпе ĕҫĕсем ҫинчен пĕлесшĕн, тĕрлĕ ыйтусем параҫҫĕ. Анчах кун ҫинчен агитаторсем те, довереннăй та суйлавҫăсене ăнлантармаҫҫĕ. К. Йа. Йаковлев агитатор начар ĕҫлемест. Вăл Карантайкассинчи колхозницăсене суйлав саккунне вĕрентет. 5 заҥати туса ирттернĕ. Кружокра 20 колхозницă, заҥатире 17—18 ҫынран кайа пулмаст̌. Анчах вăл та суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидатурăсемпĕн агитацилемест. „Епĕ уйрăм кăтарту парасса кĕтнĕ" тет вăл. Довереннăй хăй те начар ĕҫлет, агитаторсемпе те ҫыхăнса тăмаст̌. Агитаторсенчен никăш те Сергейев довереннăйа ку таринччен куҫпа курман, вĕсем ăна палламаҫҫĕ те. Вăт мĕншĕн участкăра политикăла агитаци ĕҫĕ начар. Агитаторсемпе пĕр семинар та, пĕр канашлу та ирттермен. Вĕсене ĕҫре никам та пулăшса пымаст̌. Ҫавăнпа та вĕсем агитаци ĕҫне пĕр йĕнлĕ туса пыраҫҫĕ.

Агитаторăн суйлав саккунне вĕрентнипех лăпланмала мар, кандидатсемпĕн те агитацилемеле, суйлавҫăсен спискипе те паллаштармала. Суйлавҫăсене спискăна тĕрĕс кĕртнĕ-и? Йăнăшсене вăхăтра тӳрлетмеле. Кунта суйлавҫăсем мар, агитаторсем те хăшпĕрисем суйлавҫăсен списки ăҫта ҫакăнса тăни ҫинчен пĕлмеҫҫĕ. „Епĕ суйлавҫăсен списки ăҫта ҫакăнса тăни ҫинчен пĕлместĕп, килхуҫи арăмĕсем ыйтаҫҫĕ", тет Сапун агитатор. Мĕншĕн тесен кунта суйлавҫăсен спискине суйлав участкине мар, Кӳкеҫри колхоз правленине кайса ҫакнă. Кӳкеҫри суйлав участкин списки те ҫавăнтах.

Спискăсенче чылай йăнăшсем туса пĕтернĕ. Сăмахран, 18 ҫын, хăш ҫул ҫуралнине тĕрĕс ҫырманни ҫинчен, жалăбăсем панă. Кузьмина Вера икĕ ҫул хушши ĕнтĕ Шупашкарта пурăнат̌, ăна спискăна кĕртнĕ. Ҫав вăхăтрах вăтам шкулти техничкăсене виҫĕ ҫынна, Капашпа Шупашкар хушшинчи ҫул ҫинче пурăнакан Постелов йулташсене спискăна кĕртмесĕр хăварнă, тата ыт. те.

Суйлав саккунĕнче: суйлавҫă панă заиавленине пăхса тухнă хыҫҫăн виҫĕ кунран кайа хăвармасăр тӳрлетӳсем кĕртмеле, йе ăна заиавленине мĕн сăлтавпа йышăнманни ҫинчен справкă ҫырса пымала тесе кăтартса панă. Кунта кăна пăхăнмаҫҫĕ. Жалăбăсене нойабĕрĕн 11-мĕшĕнченпе пăхса тухман. Хăшпĕр жалăбăсем ҫине йалсовет секретарĕ тимлĕн тĕрĕслемесĕрех „кĕртнĕ, тӳрлетнĕ" тесе резоԓуцисем хурса тухнă. Ҫакăн хыҫҫăн суйлав комиҫҫи председателĕ Миронов йулташ ҫавах: „жалăбăсене пурне те йалсовет президиумĕнче пăхса тухса тӳрлетме решени йышăннă" теме те вăтанмаст̌.

Участкăн ҫурчĕ лайăх. Кабинăсене те 9 туса лартнă. Анчах суйлав комиҫҫийĕ ваԓԓн уйрăм пӳлĕм уйăрман. ССР Сойузĕн Тĕпĕҫтăвкомĕ йышăннă тăрăх нойабĕрĕн 12-мĕшĕнчен пуҫласа суйлав комиҫҫи председателĕн йе секретарĕн производствă ĕҫĕнчен хăтăлса суйлав комиҫҫинче ĕҫлемеле. Кунта формаԓнă суйлав комиҫҫинче ĕҫлеме Надеждин (вăтам шкул директăрĕ) йулташа секретаре палăртнă. Вăл комиҫҫинче ĕҫлемест. Ҫавăн пекех комиҫҫи членĕсем те суйлав участкинче пулмаҫҫĕ. „Мĕн туса лармала унта", тесе тĕлĕнет комиҫҫи председателĕ Миронов йулташ. Кунта суйлав комиҫҫийĕ хăйĕн задачисене ăнланман. Ҫӳлте палăртнă ҫитменлĕхсене вĕҫке вăхăтрах пĕтерсе декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пур суйлавҫăсене те ҫĕр процентпех суйлава хутшăнтармала тумала

П. Перлов.

Татах та пысăк ҫитĕнӳсем тăвассишĕн

СĔНТĔРВĂРРИ. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли кунĕ, пысăк ҫитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн районри предприйатисемпе ертелсенче стахановла ĕҫлесси кашни кун вăйланса пырат̌. Хулари ҫĕвĕҫĕсен ертелĕ октăбĕр умĕнхи ăмăртăва хутшăнса ĕҫлесе нойабĕрĕн 7 мĕшне ҫулталăкри плана 100,3 процент тултарнă. Кунта йулашки вăхăтра ударниксемпе стахановецсен йышĕ те ӳсрĕ. Халĕ ертелре 18 стахановец, 54 ударник. Вĕсем ĕҫ тухăҫлăхĕпе пахалăхне ӳстерсе пыраҫҫĕ. Сăмахран, ҫĕвĕҫĕ Шипунов хăйĕн ĕҫ нормине 272 процент, И. Федоров 263 процент, С. Захаров—246 процент, Н. Федоров—201 процент, С. Мочалов, Трифонова, Горбунов, т. ыт. те кулленхи нормăна 126—188 процентшер тултарса пыраҫҫĕ.

Ҫавăн пекех суйлав кунне хатĕрленнĕ май Судоверфри рабочисем партăсем тăвас ҫулталăк планне суйлав кунне 100 процент тултарассишĕн социалисăмла ăмăртса ĕҫлессине нихҫанхинчен ытла вăйлатрĕҫ. Кашни цех кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса пыма пуҫларĕ. Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче партăсем тăвакан цех плана 139 процент, хăма ҫуракан цех—120 процент, тимĕрҫĕсен цехĕ—191 процент тултарнă. Партăсем тăвакан цехри Слепнов бригади ĕҫ планне 154 процент, хăма ҫуракан цехри Колчин бригади кулленхи нормăна 125—130 процентшер тултарса пыраҫҫĕ.

Ҫĕвĕҫĕсен ертелĕпе судоверфри ĕҫлекенсем хушшинче суйлав саккунне вĕренессине те лайăх йĕркеленĕ. Халĕ ҫак предприйатисенче кашни кунах ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсен—В. П. Чкалов, М. М. Сахйанова тата З. А. Андрейева йулташсен биографисемпе паллашаҫҫĕ.

В. Василйев

Суйлав участкисен центрĕсенчи суту-илӳ

Шупашкар хулинчи пур суйлав участкисенче те тенĕпе пĕрех буфетсем ĕҫлеме тытăнчĕҫ.

10 мĕш суйлав участкинчи буфет (Пичет ҫурчĕ) каламалла ҫук аван ĕҫлет. Вăл нойабĕрĕн 27-мĕшĕнче 800 тенкĕлĕх тавар сутнă.

Буфетра тем тĕрлĕ таварсем те пур. Вĕсене пурне те витринăсем ăшне йĕркелĕн илемлетсе вырнаҫтарнă. Акă ҫӳлĕ, кантăк витринă. Ҫӳлти ҫӳлĕкĕ ҫинче пит куҫ ҫумалли, кĕпе-тумтир ҫумалли супăҥсем, духи, одеколон, шăл тасатмалли порошок коробкисем, шчоткăсем. Айалти ҫӳлĕкĕсенче тĕрлĕрен ҫимĕҫсене турилкке ҫине тийе-тийе хунă. Кунта 9 тĕрлĕ конфет, 6 тĕрлĕ печени, компот, сушкăсем, 3 тĕрлĕ консервă, чăкăт, пулă, тавар пур. Тепĕр витрини ҫинче булкăсем Булкă мĕн пурĕ 6 тĕрлĕ, тата 3 сурт ҫăкăр. Виҫҫĕмĕш витрини ҫине табаксем, 5 сурт пирус, спичкă.

Суйлав комиҫҫи ĕҫлекен зала пыракан ҫын буфетра илнĕ йапаласене канлĕн ларса ĕҫсе ҫиме пултарат̌. Буфет умĕнчех сĕтелсемпе пукансем лартнă. Сĕтелсем ҫине клейонкă сарнă, чечексем лартнă.

Ленинградскайа урамра 6-мĕш номĕрлĕ шкулта 11-мĕш суйлав участкин комиҫҫийĕ ĕҫлет. Кунта та буфет аван ĕҫлет. мĕн пурĕ 54 тĕслĕ тавар. Буфетра йаланах вĕри чей ĕҫме пулат̌.

12 мĕш суйлав участкинче те (Строителсен клубĕ) буфет уҫнă. Анчах та унта таварсем ҫителĕксĕр Супăҥ, духи таврашсем ҫук. Буфетра ҫăкăр та сугмаҫҫĕ-ха.

Суйлав участки комиҫҫисем ĕҫлекен ҫуртсенче халăх пур чухнетатти сыппиcĕр суту-илӳ тумала Суйлав кунне—декабĕрĕн 12-мĕшне суту-илӳ организацисен вăйлăн хатĕрленмеле.

В. А.

Куԓабск районĕнчи „Байраки Сурх" колхоз председателĕ орденоносец Гавгар Шарипова—Куԓабск суйлав округĕ тăрăх Национаԓнăҫсен Советне депутата суйланма баллотировкăна тăрат̌. (Таджик ССР).

(Сойузфото).

„Боԓшевик" заводăн ҫĕнтерӳвĕ

ҪĔМĔРЛЕ (телефон тăрăх). ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавне хатĕрленсе, Ҫĕмĕрлери „Боԓшевик" заводри коллектив ҫулталăкри плана нойабĕрĕн 28 мĕшне 100 процентпех тултарчĕ. План тăрăх 3300 тоннă тоннида туса кăларас вырăнне 3302 тоннă тоннидă туса кăларчĕ.

Заводри коллектив 1937 ҫул пĕтнĕ ҫере ҫĕршыва планран ирттерсе 340 тоннă тоннида пама йе ҫулталăкри плана 110 процент тултарма пулат̌.

Иваницкий.

Унăн колхозĕ малта пырат̌

ИЕТЕРНЕ. Мăн Шемертенти „Ленин хушăвĕ" колхозра колхозниксемпе колхозницăсен пĕрлешӳлĕ пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура 80 ҫын ытла пухăннă.

Пухура Сойуз Советне депутата суйлама регистрациленĕ Андрей Михайлович Краснов йулташ кандидатури ҫинчен сӳтсе йаврĕҫ.

—„Крестьянская газета" колхозăн председателне, Андрей Михайлович Краснов йулташа, пит аван пĕлетĕп. Вăл пултаруллă ҫын. Халăх ĕҫĕшĕн тунтанах тăрăшат̌. Краснов йертсе пыракан колхоз районри чи малта пыракан колхоз. Колхозра лайăх ĕҫленĕшĕн ăна правителствă пысăк наградă пачĕ. Епĕ Аслă Совета суйланă чухне уншăн сасăлатăп,—тет Г. Илйин колхозник.

Пухура тухса калакансем Аслă Совета А. М. Краснов, А. М. Розанов, В. П. Чкалов йулташсен кандидатурисемшĕн пурте пĕр кăмăллă пулса сасăлассиҫинчен калаҫҫĕ.

М. Шабров.

Укҫа-тенкĕ пухас ĕҫе вăйлатмала

Нойабĕрĕн 1-мĕш тĕлне Патăрйел районĕнче 4 мĕш кварталăн финанс планне 22,2 процент ҫеҫ пуҫнăҫланă. Район республикипе 23-мĕш вырăна йышăннă. Апла пулин те районри финанс ĕҫĕпе ĕҫлекен ҫынсем тăватăмĕш кварталăн финанс планне ăнăҫлă тултарассишĕн тивĕҫлĕ кĕрешĕве пуҫламан. Нойабĕрĕн 20 мĕш тĕлне займ, куԓтсбор пухас плана 30 процентран ытла тултараймаи, йалхуҫалăх налогĕ пухассипе плана 47 процент тултарнă. Уйрăмăнах займ укҫи пухасси йединоличниксем хушшинче йулса пырат̌.

Ҫак ҫитменлĕхсем вĕсем пĕтĕмпех районри финанс пайĕнче ĕҫлекен инструкторсем йалсоветсенчи финанс секцисемпе, активпа ҫирĕп ҫыхăнса ĕҫлеменнинчен килеҫҫĕ. Сăмахран, Ҫĕнĕ Ахпӳртпе Кивĕ Ахпӳрт йалсовечĕсем финанс планне тултарас ĕҫре уйрăмăнах йулса пыраҫҫĕ. Вăл йалсовет ҫумне ҫирĕплетнĕ инструктор Йершов йулташ 4 мĕш квартăл пуҫлансан, вăл йалсенче 2 хут пулнă пулин те, ĕҫре нимле улшăну та тăваймаи. Мĕншĕн тесен, вăл финанс секци членĕсемпе, активпа ĕҫлемен.

Ҫавăн пекех Маԓцевпа Шатилов инструкторсен участкисенче те йулса пыракан йалсоветсем пур. Вĕсем те Йершов йулташ пекех финанс планне тултарас ĕҫе вырăнсенче тивĕҫлипе организацилеймен. Инструкторсем йалсоветсенче стена хаҫачĕсем финанс планне тултарассишĕн мĕнле кĕрешни ҫинчен пĕлмеҫҫĕ. Парти Чăваш Обкомĕн нумай пулмаст̌ пулса иртнĕ пленумĕ районсенче финанс планне тултарасси ҫителĕксĕр пынине палăртса, ку ĕҫре халех улшăну тума конкретлă кăтартусем парса хăварчĕ. Анчах пленум пулса иртнĕ хыҫҫăн та районра финанс планне тултарассишĕн тивĕҫлĕ ĕҫе пуҫăнни сисĕнмест-ха. Районри финанс пайĕн пуҫлăхĕ Александров ку ыйтупа йалсовет председателĕсен канашлăвĕнче пĕрре тухса каланипе, план тукаланипе чарăнса ларнă. Пленум решенине боԓшевикла пурнăҫлас тесен социалисăмла ăмăртăва сарса йарса, йалсоветсенчи финанс секцисене, актива финанс планне тултарас ĕҫе тивĕҫлипе йавăҫтарни кирлĕ.

Ф. Ҫитта.



ПСК(б)П Карачайевск обкомĕн секретарĕ Ибрагим Калмукович Темиров—Усть-Джегутински суйлав округĕ тăрăх Национаԓнăҫсен Советне депутата суйланма баллотировкăна тăрат̌ (Карачайĕвск автономлă облаҫĕ).

(Сойузфото)

Колхозсем пысăк тухăҫлă тырă туса илчĕҫ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Кăҫал колхозсем пысăк тухăҫлă тырă туса илчĕҫ. „Радио" колхоз гектартан 26 центнер ыраш, уйрăм участкăсенче 28-шер центнер, кĕрхи тулă 21,5 центнер, уйрăм участкăсенче 39,81 центнер, сĕлĕ 23 центнер, уйрăм участкăсенче 27 центнер, вир 34 центнер туса илнĕ.

Сорăм колхозĕнче те ҫавах. Уйрăм участкăсенче тулă гектартан 34 центнер, сĕлĕ 42 центнер, выԓăх-чĕрлĕх кăшманĕ 750 центнер туса илнĕ.

Пр. Сатур.

* * *

Лапри Чăрăшкассинчи (Сĕнтĕрвăрри районĕ) „Социализм" колхоз кăҫал гектартан вăтам шутпа 22, 76 центнер тĕштырă туса илнĕ. Кунта кашни ĕҫкунĕ ҫине 30-шер кĕренке тырă валеҫеҫҫĕ. Колхозниксем нумайĕшĕ кăҫал 2—3 ҫул ҫимелĕх тырă илеҫҫĕ. Кириллов Йегор ҫемйи—438 пăт, Н. Быков—397 пăт, А. Карпов—363 пăт, стахановка Степанова Йевдокийа хăй пĕччен ĕҫлесе 228 пăтран кайа мар тĕштырă илет.

В. В.

„Комсомол" теплоход мĕнле пĕтнĕ

Г. А. Мезенцев
„Комсомол" теплоход капитанĕ

Совет Сойузĕн хĕрарăмĕсемпе ачисем республикăлă Испанин халăхĕ ваԓԓи пухнă парнесене епĕр Валенсине кӳрсе патăмăр. Валенсиран кайала таврăннă чухне, епĕр Хура тинĕсрех Поти портне руда тийеме кĕмешкĕн приказ илтĕмĕр. Ҫав рудана пирĕн Белгийе—Гента леҫсе памала пулнă.

1936 ҫулти декабĕрĕн 2-мĕшĕнче епĕр ĕнтĕ Потире пулнă. Йаланхи пекех хăвăрт тийерĕмĕр. Ҫулталăк планне епĕр йĕркуннех ĕнтĕ тултарнă пулнă, пирĕн планран ирттерсе стахановла виҫҫĕмĕш рейс тумала пулнă,—епĕр ку рейса ҫулталăкри йулашки рейс пулат̌, тесе шутланă, ҫавăнпа та епĕр ăна чи чаплă ĕҫ вырăнне хунă.

Декабĕрĕн 5-мĕшĕнче Гента кайма тухрăмăр. Ыран декабĕрĕн 14-мĕшĕ тенĕ чух ҫĕрле Алжир патĕнчен иртсе кайрăмăр.

Унтан кайранхи вара ĕмĕрлĕхе асăма йулчĕ. Епĕ машинă отделенинче. Пурте, салонри пек, йăлтăртатса тăраҫҫĕ. Ҫав вăхăтра вахтеннăй пырса тăчĕ те, крейсер сывхарса килет, тесе каласа пачĕ.

Епĕ хăвăрт тухрăм та, борт ҫывăхĕнче суднă тăнине курса илтĕм. Вăл кивĕ Испани флагне ҫакса йанă. Палубă ҫинче ҫынсем нумайăн тăраҫҫĕ, орудисем ҫинчен ҫивиттисене илнĕ, тупписене пирĕн йеннелле тĕлленĕ.

Крейсер ҫинче „суднăна чарăр" тенĕ сигнал хăпартрĕҫ. Сигнал иккĕленмелле мар, анчах манăн командă хăйне хăй пачах лăпкă тытса. Кашни хăйĕн ĕҫне тунă. „Сигнала куратăп, анчах чухласа илейместĕп",—тесе ответ патăм епĕ.

Ҫав хушăрах, епĕ сигнал антарассине кĕтсе тăмасăр, вĕсем шԓупкă ҫине ларчĕҫ те пирĕн пата ҫул тытрĕҫ. Шԓупкăра офицер, переводчик, пăшалсемпе тата револьверсемпе хĕҫпăшаланнă ултă матрос. Епĕ асăрхаса илтĕм: хĕҫпăшалсем пурте — Итали хĕҫпăшалĕсем. „Комсомол" борчĕ ҫине ҫав бандă йăлтах пират пек хăпарчĕ,—манăн помошниксенчен пĕри, хăпарма пулăшас тесе, офицера кăмăллăн хăйĕн аллине пачĕ, офицер унăн аллине тĕртсе йачĕ.

Часах кайутăсене хупăрласа илчĕҫ. Офицер груз документсене, екипаж спискине, судно документсене ыйтрĕ.

— Суднăна персе путаратпăр, ҫăлăнма сире вунпилĕк минут паратпăр, — терĕ офицер.

Епĕр Франко генералĕн матросĕсене пăхса йулма ĕлкĕртĕмĕр. Пурте вĕсем калама ҫук йапăх тумланнă, ҫи-пуҫĕсене салатса йанă, урисене пир туфлисем тăхăнса йанă.

Епĕ документсем тыттарнă хыҫҫăн, офицер: „Крейсер ҫине пырăр", тенĕ приказ пачĕ.

Тăхтаса тăма май ҫук. Манăн командă анма хатĕр, теплоход ҫинче пурнăҫ мĕн йулашки минутчченех йаланхи пек пынă. Пĕчĕк те, анчах паллă тĕслĕх. Пирĕн уборщицăна Марийа Василйевăна, суднăна хăварма панă распорйажени пур тесен, вăл ҫапла ответленĕ:

— Тăхтăр-ха, манăн урай ҫуса пĕтермеле.

Пирĕн суднă ҫинче икĕ хĕрарăм пулнă: Фоменко Марийа Василйевна тата буфетчицă Боуманова Тат̌йана Василйевна. Епĕр чи малтан вĕсене шԓупкă ҫине антартăмăр. Вĕсен аллинче пĕчĕкшер йапала, тĕрĕсрех каласан, тутăрна ҫыхнă хăшпĕр кĕпе-йапалисем пулнă. Ыттисем—арҫынсем — пĕр йапала илмесĕр хăйсемех вĕрен тăрăх анчĕҫ.

Хыпăнса ӳкмесĕр тата пăшăрханнине палăртмасăр, аван анса лартăмăр.

Крейсер пирĕнтен темиҫе ҫĕр метрта тăнă. Унăн сигналне кашнийех курнă. Тахăшĕ пĕри, „Канариас" пулмала, терĕ. Чăн та, йăнăшман иккен.

Епĕ чăн йулашкинчен антăм та, шԓупка теплоход ҫумĕнчен уйăрăлса кайрĕ. Никам та чĕнмест. Пирĕнтен кашнийех, крейсер командирĕ пире хăйĕн патĕнчен хăваласа йарса, пирĕн пурнăҫа тинĕсе парат̌, тесе шутланă. Вĕренмели „Товарищ" парусник ҫинче тăватă ҫул ишсе, епĕ тинĕс тăрăх ишме хатĕр пулнă. Епĕр шԓупкăпа та ҫилтăвăла ҫĕнтерме пултарнă.

Епĕр крейсер патне ҫывхарса пынă чухне, пире темиҫе хут та ӳкерсе илчĕҫ. Унтан трап антарчĕҫ те, хăпарма приказ пачĕҫ. Крейсер команди хăйне чăрсăр тыткалат̌: ехлетсе кулаҫҫĕ, кăшкăраҫҫĕ, чышкăсем кăтартаҫҫĕ. Матроссен куҫĕнче кăна пирĕн ҫине кăмăллăн пăхнине куртăмăр: пире нейтраԓлĕ ҫĕрте йарса тытнине кӳра, морйаксем кăштах лайăх маррине туйнă.

Обыск тунă хыҫҫăн пире полуйутă ҫине тăратса тухрĕҫ: пире персе пăрахма хатĕрленеҫҫĕ ĕнтĕ, тесе шутласа илтĕмĕр. Епĕр ĕнтĕ пурне курма та хатĕр пулнă. Пырса тăнă офицер мана англи чĕлхипе екипаж спискине туса пама хушрĕ. Епĕ ҫырса патăм. Листока хăвăрт пăхса тухса, суднă ҫинче тата кам йулнă?—тесе ыйтрĕ офицер. „Комсомол" ҫинче никам та ҫук, тесе ответ патăм епĕ.

Вĕсем вара „Комсомола" тупăсенчен пеме пуҫларĕҫ. Пуринчен те пĕр харăс тĕрслеттереҫҫĕ. Хушши инҫе мар, анчах та малтанхи снарйадсем тĕл лекмерĕҫ.

Суднă чĕтренсе ҫеҫ тăрат̌, пирĕн чĕресем те ҫӳсене-ҫӳсене кайаҫҫĕ, хамăр пурнăҫпăн хăранипе мар, ҫав пиратсене пĕтĕм ăпран кураймасăр тарăхнипе.

Пĕтĕмпе вĕсем 35 снарйад кăларса ирттерчĕҫ.

„Комсомол" йăлтах путса анса кайнине пирĕнтен никам та курман. Снарйадсенчен пĕри нефт̌ тултарнă резервуара лексе, пирĕн суднă ҫунма пуҫланине ҫеҫ курса йултăмăр. Хĕҫпăшаллă салтаксем, винтовкисене пеме хатĕр тытса, пире хупăрласа илсе касамата илсе кайнă чух, пирĕн теплоходăн путма пуҫланă хыҫĕ ҫинче флаг вĕлкĕшсе тăратчĕ.

Пире икĕ ушкăна пайларĕҫ, хĕрарăмсене уйрăм хупса лартрĕҫ. Теплоход ҫинчен епĕ хампала пĕрле карттăпа вахтă журналне илнĕччĕ. Карттине вĕсем обыск тунă чухне туртса илчĕҫ, анчах вахтă журналĕ хам ҫумрах йулчĕ. Касаматра епĕр сехет ҫурă хушши тупăсен сассине тата снарйадсем хыттăн ҫурăлнине итлесе лартăмăр. Ҫаплах переҫҫĕ. Крейсер хирĕҫ килекен суднăсене хăваласа йарат̌, ҫунакан „Комсомол" патне ҫывхарма памаст̌.

Сехет иртсен допрос пуҫланчĕ. Чи малтан мана чĕнсе илчĕҫ. Допросне испанец пек пулма айванла хăтланакан нимĕҫ офицерĕ турĕ.

Крейсер ҫинче епĕр мĕн пулассине пĕлмесĕр сакăр талăк ирттертĕмĕр. Пире ҫав тери йапăх ҫитерсе, епĕр хамăр кухԓă ҫинчен пĕр хут кăна мар асăннă. Выҫасса та чылай выҫрăмăр. Касаматра ларнă чухне епĕр икĕ хутчен тупăсенчен пенине илтрĕмĕр. Кайран, республикăлă Испанин хӳтлĕхсĕр йалĕсене пенине, пĕлтĕмĕр.

Декабĕрĕн 22-мĕшĕнче Кадикса ҫитрĕмĕр. Крейсера саламласа флагсемпе кĕтсе илчĕҫ. Пĕр хĕҫпăшалсăр мирлĕ карапа ҫĕнтерӳлĕн путарнă йатпа саламланă пулмала.

Ҫырана тухсан пире ҫавăнтах жандармсемпе хĕҫпăшаллă салтаксем хупăрласа илчĕҫ. Пĕри манăн картуса сĕлтăрса илчĕ. Картус ҫинчи ҫурлапа мăлатуклă значока курсан, жандармсем: „А, боԓшавик", тесе сăмрĕле пуҫларĕҫ. Ҫавăн хыҫҫăн ман ҫине картуса чăлăш чĕлĕш лартса йарса, тĕрмере нумай ĕҫленĕ ҫынсем пек, манăн алсене хăвăрт сăнчăрласа лартрĕҫ.

Ҫавăнпа пĕтет пулĕ, тесе шутланăччĕ епĕ. Анчах, ман ҫумра тăракан Павленко матроса ҫавăн пекех сăнчăрласа, манăн сылтăм алла тата унăн сулахай аллине пĕрле кантрапа ҫыхса лартрĕҫ. Ыттисене те ҫавăн пекех турĕҫ.

Портран пире таҫта-хăйамата илсе кайрĕҫ. Хула таҫта айакка тăрса йулчĕ. Йĕритавра сĕм-ҫĕрле тăрат̌. Нумай кайсан, шалтăн аран-аран ҫутă паракан ҫурт патĕнче чарăнса тăчĕҫ. Вăл казармăсем пулнă мĕн.

Жандармăсем унта йурийех, пире салтаксем курччăр тесе, чарăнса тăнă. Салтаксем автомобиԓ патне пырса, ним шарламасăр пирĕн ҫине пăхса илчĕҫ. Жандармсем теме кура мухтанаҫҫĕ, пурте ӳссĕр, паллăсемпе пире персе пăрахма илсе кайатпăр, тесе кăтартаҫҫĕ. Унтан, пирĕн патала ҫавăрăнса тăрса, револьверĕсене туртса кăларчĕҫ, тутисемпе чăплаттарса патронсем ҫине кăтартрĕҫ.

Йулашкинчен, пире темĕнле тĕксĕм замăк патне илсе ҫитерчĕҫ. Вăл Андалузири „Санта-Мариа" тĕрмĕ пулнă мĕн. Жандармсем ăна кула-кула „Палас Франко" тесе пĕтерчĕҫ. Ҫав „дворец" патĕнче пире стенапа йунашар тăратса тухрĕҫ. Пăшал затворĕсене уҫса-хупма, прикладсемпе шаккама тытăнчĕҫ. Пире персе пăраханҫи тума пуҫларĕҫ.

Кĕтмен ҫĕртен тĕрме алăкĕнчен охранă тухрĕ. Резинă патаксемпе сулкаласа, вăл пире тĕрмене илсе кĕчĕ. Жандармсем хыҫран темскер кăшкăрса йулчĕҫ, анчах лешсем, „обыск" тума васкаса, илтеймерĕҫ. „Обыск" тăвасси мĕнĕ пирĕн кăсйисене саратассинче пулчĕ.

Ирхине манăн камера офицер кĕчĕ те „хама-хам тыткаламалли правилă" ҫинчен пĕлтерчĕ. Правилăсем темĕн чухлех, анчах вĕсем пурте „йурамаст̌" тенĕ сăмах патне илсе пыраҫҫĕ. Итали сăмахĕсене Испани сăмахĕсемпе пăтраштарса, пурнчен ытла пит-куҫне пĕркелесе тата аллисемпе хуҫкаланса, офицер мана ҫапла ăнлантарса пачĕ: тĕрмере йурлама йурамаст̌, вулама йурамаст̌, ҫырма йурамаст̌, туртма йурамаст̌, шăхăрма йурамаст̌, хушăкран пăхса илме тата ҫĕлеме йурамст̌, ҫавăн пекех тата кун каҫаччен выртма тата тайанса выртма та йурамаст̌.

Уйăх иртрĕ. Пире йытăсене ҫитерниччен те йапăх ҫитерсе пурăнчĕҫ. Ҫĕрĕк йасмăкпа пĕчĕк татăк ҫăкăрсăр пуҫне урăх нимĕн те паман. Йашка пек пăтранчăк шывра туллийех хуртсем. Малтан епĕр вĕсене иле-иле пăрахаттăмăр, кайран хăнăхса ҫитрĕмĕр. Ирпе пире „кофе"—сахăрсăр пăтранчăк шыв паратчĕҫ. Ăпă шыв паман, ҫав тискер тыткăнра вунă уйăх хушши ларса супăҥ та курман.

Кунсерен ир те каҫ та, пурте пĕр ҫын пек, сивĕ шывпа ҫăвăннă. Физкуԓтурă тунă. Кун каҫа хамăр пӳлĕмсене ҫирĕмшер хут тасатнă—„Санта-Мариа" пĕртен-пĕр ҫав ĕҫе тума ҫеҫ ирĕк пур. Анчах ҫав ĕҫе тума та пĕчĕк ҫĕтĕк татки кăна панă, ҫӳҫесене алпа пуҫтармала пулнă.

Ирхине ултă сехетре тĕрмере кун пуҫланатчĕ. Гудок тăрăх тăнă, сигнал тăрăх—ал тупанĕпе икĕ хут ҫупсан—камерăран стройа тăма чупса тухмала пулнă.

Ҫавăнтан перекличкă пуҫланнă. Кайа йулса тухакансене алла мĕн лекнĕ ҫавăнпа хĕненĕ. Кайарахпа, епĕр саралма, начарланма, вăйран кайса ӳкме пуҫласан, часах пирĕн вилĕсене пухмали кăна йуласси фашиссемшĕн те паллă пулсан, пире уҫăлтарса ҫӳреме пуҫларĕҫ. Анчах унта та тĕрĕслеве кайа йулса тухакансене хĕнеме пăрхман, йе вĕсене 7, 14 кун йе 30 кун хушшийех те уҫăлма кăларман.

Хытă асăрхаса уҫăлтарса ҫӳретнĕ. Пире уйрăм корпусра тытса усранă, харакансенчен пире никам та курмала мар

Харитонова йулташ çамрăк суйлавçăсем патĕнче

ПАТĂРЙЕЛ. Ноябрĕн 28-мĕшĕ. Пайан 3 сехет тĕлне Патăрйел Кулътçурчĕ çамрăксемпе тулчĕ. Кунта колхоз стахановецсемпе ударникĕсем, вĕренекенсем—телейлĕ совет çамрăкĕсем суйлав умĕнхи районри канашлăва пухăнна. Вĕсем хушшинче кăçал кăна суйлава хутшăнакансем те чылай. Канашлăва Патăрйел суйлав округĕнчен Национальнăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртнă Харитонова йулташ пычĕ. Акă çамрăксем хăйсен савнă учительницине тăвăллăн алă çупса ăшшăн кĕтсе илчĕç. Канашлура малтан комсомол райкомĕн 2-мĕш секретарĕ Терентйев йулташ Аслă Совет суйлавне çамрăксем хутшăнса ĕçлесси çинчен сăмах тухса каларĕ. Тухса калаçакан çамрăк суйлавçăсем чи малтанах хăйсен сăмахĕсенче телейлĕ çамрăклăх кӳрекен тĕнчери чи демократлă Конституци туса параканăн йатне—Сталин йулташа асăнчĕç.

— Епĕ кăçал чи малтанхи çул суйлатăп. Çак савăнăçа ниçта та хураймастăп. Епĕ хамăн сасса пире телейлĕ çамрăклăх панă Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн паратăп, —терĕ Хирти Сĕнтĕр шкулĕнчи учител Наколайев йулташ.

— Епĕр Октябĕр çамрăкĕсем, епĕр, савăнăçлă ăру, кăçал чи малтан суйлава хушăнатпăр, суйлав кунĕ пирĕн истори халиччен курман чаплă кун. Çак кун епĕ хамăн малтанхи сасса большевикла партин паттăр ывăлĕсемшĕн—Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсемшĕн паратăп, —терĕ Гаврилов комсомолец (тăвăллăн алă çупасçĕ).

Канашлура Харитонова йулташ сăмах тухса каларĕ. Вăл çамрăксен ĕлĕкхи тĕксĕм пурнăçĕпе халъхи савăнăçлă пурнăçа тĕплĕн танлаштарса кăтартрĕ.

Аçа Аслă Совета суйлама кандидата палăртса пысăк шанăç хунăшăн çамрăк суйлавçăсене хĕрӳллĕн тав турĕ.

— Епĕ çамрăках мар ĕнтĕ. Анчах есĕр ман çине хунă шанăçа ĕçпе ответлеме манăн чĕре сирĕнни пекех çамрăкха, —терĕ Харитонова йулташ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ)

Йулашкинчен пуху Патăрйел округĕнчи суйлавçăсене пурне те хăйсен сассисене Чкалов, Спасов тата Харитонова йулташсемшĕн пама чĕнсе постановлени йышăнчĕ.

Н. Пушкин,
Ф. Майков.

Манăн савăнăç

— Манăн пĕтĕмпе ултă ача. Пурте вĕсем совет шкулĕнче вĕренеççĕ. Аслă ывăлĕ, Кольă, Хусанти строителсен шкулĕнчен инженер пулса тухрĕ. Теприйĕ, Коçтă, çулйĕр ĕçĕнче техник пулса ĕçлет. Пирĕн çĕршывра хĕрарăмсене те вĕренме ирĕк панă. Венă йатлă хĕр халь çеç йалхуçалăх техникумĕнчен вĕренсе тухса, агроном пулса ĕçлет.

Кĕçĕн хĕр, Лизă, Горькинчи йалхуçалăх институтĕнче вĕренет.

Ваньă Сĕнтĕрвăрринчи çĕрĕç техникумĕнче, Витă—кĕçĕнни, вăтам шкулта 2-мĕш класра отлично вĕренсе пыраççĕ.

— Мĕншĕн-ха манăн савăнас мар?

Ĕçхресчен ачисене çавăн пек вĕренме Сталин йулташ çеç ирĕк пачĕ. Çавăнпа та пире йертсе пыракан çулпуçне пысăк тав тăватăп, —тет Çерпӳ хулинчи Полевой урамĕнче пурăнакан Аннă Клементйева.

„Пире ĕлĕк вĕренме ирĕк паман. Халĕ епĕ Аслă Совета суйлама вĕренмели кружока пĕр сиктермесĕр çӳретĕп. Чăвашла хаçатсене те йаланах вуласа тăратăп, Совет Союзĕнче пулса иртекен ĕçсене пĕлсе пыратăп"—тет вăл.

С. Падейев.

Суйлав кунне çĕнĕ йурăсемпе кĕтсе илетпĕр

Упири (Трак р.) туллимар вăтам шкул çумĕнчи хор кружокĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпах ĕçлет. Унта пĕтĕмпе 80 çын тăрат. Кружокăн ĕçне В. Спиридонов преподавател пуçарса пырат.

Хор кăçал республикăри иккĕмĕш радиофестивале хутшăнса, хăйĕн пултарулăхне уçăмлăн кăтартрĕ.

Халĕ, суйлав кунĕ çывхарса килнĕ май, кружок çĕнĕ йурăсем чылай вĕренчĕ; час-часах хор суйлавçăсен пухувĕсем хыççăн концертсем туса иртерет.

Суйлав кунне епĕр çĕнĕ йурăсемпе хаваслăн кĕтсе илетпĕр.

И. М.

Çитĕннисене вĕрентме тытăнман

Хĕрлĕ Чутай районĕнче çитĕннисене хут вĕрентес ĕç йапăх выранта тăрат. Райçутĕçпайĕн пуçлăхĕ Челейкин йулташ каланă тăрăх районра хут пĕлменнисем 1247 çын ытла. Хут сахал пĕлекенсене учота илсе пĕтереймен.

Виçĕ йалта çитĕннисене вĕрентес тĕлĕшпе группăсем организациленĕ. Анчах вăл группăсем кирлĕ пек ĕçлесе пымаççĕ. Чылай йалсоветсенче çитĕннисене вĕрентес тĕлĕшпе выранта та тапранман. Атнар йалсоветĕнче хут пĕлменнисем 124 çын. Кунта вĕсене вĕрентме вăйсем çителĕклĕ.

Районра хут пĕлмен допризывниксем 126 çын. Вĕсене те вĕрентме тытăнман. Райçутĕçпайĕнче хут пĕлменнисене верентес тĕлĕшпе ĕçлекен инструктор А. Дерстуганов хăйĕн ĕçĕпе нимĕн те тумаст.

П. Сатур.

Хор кружокĕ организацилерĕç

ИШЛЕЙ. (Хамăр корр.). Вăрман-Сӳктер йалĕнчи çамрăксем ноябрĕн 19-мĕшĕнче 30 çынтан хор кружокĕ организацилерĕç. Хор Аслă Совет суйлавĕ тĕлне—декабрĕн 12-мĕш тĕлне „Песня о Сталине", „Песня о родине" тата „Каховка" йурăсене йурлама вĕренет. Вăлах М. Горькин „Васса Железнова" пйесине лартма хатĕрленет.

П. Архипов.

Вылъăх-чĕрлĕх переписне иртерме халех хатĕрленмеле

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне вылъăх-чĕрлĕх хисепĕ мĕн чухлĕ пулнине пĕлме Пĕтĕм Союзĕпе перепис туса иртересси çинчен постановлени кăларчĕ. Вылъăх-чĕрлĕх переписне кашни çулах иртереççĕ. Кăçалхи перепис вăл иккĕмĕш пйатилеткăра вылъăх-чĕрлĕх ĕçĕнче мĕн чухлĕ çитĕнӳсем пулнине, вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне пурнăçа мĕнле кĕртнине кăтартакан итог туса виççĕмĕш пйатилеткă валъли план тума материалсем парат.

Çак пысăк та ответлă ĕçе иртерме халăх хуçалăх учочĕн Тĕп Управленине хушнă. Ытти органсенчен çак ĕçре пуринчен ытла районри çĕрĕç пайĕсем ответлă пулаççĕ.

Ку таранчен хăшпĕр районсенчи çĕрĕç пайĕсем вылъăх-чĕрлĕх переписне кирлĕ пек хак паманнипе переписе йаланхи статистикă ĕçне тунă пек туса иртерне. Кăçал вылъăх-чĕрлĕх переписĕ çине çавăн пек пахни пĕртте пулмала мар. Кăçалхи перепис уйрăмăнах пысăк пахалăхпа иртмеле.

Перепис иртерессипе райçĕрĕç пайĕсем умĕнче мĕнле конкретлă задачăсем тăраççĕ-ха?

Чи малтанах перепис пуçланаччен, 1938 çулхи йенварĕн 1-мĕшне вылъăх-чĕрлĕхсене инвентаризаци тумала. Иртнĕ переписсенчи опытсем чылай колхозсенче инветаризаци ĕçне вăхăтра иртерменнине кăтартрĕç. Çитменнине тата çамрăк вылъăхсене, вĕсем миçе уйăхрине уйрăм кăтартмасăр, ушкăнпа çырса пынă. Кăçалхи переписе ытти переписсенчен уйрăмах паха туса иртермеле пулсан, районри çĕрĕç пайĕсен колхозсене çителĕклĕ пулăшу памала.

Переписе хатĕрленнĕ май колхозри оперативлă отчетсене малтанах йĕркелемеле. Декабрĕн 1-мĕшне вылъăх-чĕрлĕх шучĕ мĕн чухлĕ пулнине кăтартакан цифрсем переписĕ иртерекен регистраторсене валъли контроллĕ материалсем пулмала.

Перепис иртересси çинчен тата перепис задачисем çинчен халăха ăнлантарса памала. Перепис иртернĕ чухне пур колхозсенче те пулăшу бригадисем уйăрмала. Çак бригадăсем регистраторсене пĕр вылъăх хăварми переписе кăртулă иртерме пулăшмала.

Перепис итогĕсене колхозниксен пухувĕсенче, йалсовет ларăвĕсенче сарлакан сӳтсе-йавассине организацилемеле. Кунта ĕнтĕ вылъăх хисепне кăтартакан цыфрсене, колхозсенче пĕрлештернĕ вылъăх-чĕрлĕхсен хисепĕ ӳснине тата колхозниксен хăйсен килĕсенчи вылъăх-чĕрлĕхсен хисепĕ ӳснине уççăн кăтартса памала.

Перепис резултачĕсене сӳтсе-йавнипе пĕрлех хĕллене мĕн чухлĕ хатĕрленнине, вылъăхсене валъли апатсем уйăрнине лайăх тĕрĕслесе тухмала. Иртнĕ çул хăшпĕр колхозсенче, вылъăх апачĕсем çителĕксĕр пулнипе усă курса, тăшмансем вылъăхсене сутса тата ытти сăтăрла майсемпе вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сийен кӳме тăчĕç.

Кăçалхи çул та хĕллене хатĕрленес ĕç лайăх пырат теме çук-ха. Хăшпĕр колхозсенче ку тарана çитсе те вылъăхсен апачĕсене уйăрса фермă пуçлăхĕсен аллине актăпа çирĕплетсе паман. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Хырлукасси, Херлĕ Токнаш колхозсенчи фермăсенче вылъăхсене валъли витесем хатĕрлемен çеç те мар, вылъăх апачĕсене те уйăрман.

Йĕпрес районĕнчи „Тымар", „Коминтерн" тата ытти чылай колхозсенче хĕллене хатĕрленме тытăнман та. Çак илсе кăтартнă фактăсем колхозсенче ку ĕç çине çителĕклĕ пăхманнине аванах кăтартса параççĕ.

Вылъăх-чĕрлĕх переписне иртересси çинчен выранти тивĕçлĕ организацисенче сӳтсе-йавса, вăл ĕçе тĕплĕн иртерсе социалисăмла вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитĕнӳсене татах ытларах ӳстермели майсем кăтартса хăвармала.

Витебскри зоотехникăпа ветеринари институтĕнчи профессор Григорий Йаковлевич Белкин йулташ—Горецк суйлав округĕ тăрăх (Белорус СС Республики) Национальнăçсен Советне депутата суйланма баллотировкăна тăрат.

(Союзфото).

Çĕнĕ сатсем

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр.). Кăçал чылай колхозсем çĕнĕ сат тăвас ĕçе тытăнчĕç. Вырăс Улхашри „Лесной Огонек" колхоз сат тума 4 гектар çĕр уйăрчĕ. Çак кĕркунне сат выранне 380 тĕп улмуççи (вăл шутран 25 тĕп Мичурин сурчĕ), 1500 тĕп килес çул сыпмали лартнă. Сат ĕçĕнче йатарласа уйăрнă бригадă ĕçлет.

Хударти Ленин йачĕпе тăракан колхоз 2 гектар çинче сат тунă. Унта 2 пин тĕп хурлăхан, 1000 тĕп вишни, 600 тĕп хăмла çырли лартнă. Кунсăр пуçне тата çак сатра пĕлтер акна вăрлăхран 5000 тĕп улмуççи çитĕнет, кăçал кĕркунне питомник тума тата 2 килограм панулми вăрри акса хăварчĕç. Сатра курсран вĕренсе тухнă Карпов йулташ ĕçлет.

Кăçалхи çул районĕпе илсен 44 гектар çинче çĕнĕ сат тума тытăннă.

Х. Лисин.

Колхозсенче тупăшсене валеçес ĕçе хăвăртлатмала

ЕЛĔК. Колхозсем кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Пур культурăсем тăрăх та вăтам шутпа кашни гектартан 15,9 центнер тĕштырă пухса илнĕ. Уйрăм колхозсем татах та вăйлă тырпулă илнĕ. Матăк йалсоветĕнче Вăрманкас колхозĕнче рекордлă участкăсем çинчен вăтам шутпа гектартан сĕлĕ 40-шер центнер, ытти çĕр çинчен 25 шер центнер туса илнĕ. Çав колхозрах ыраш вăтам шутпа кашни гектартан 23 центнер тухнă. Çавнашкалах Тури Хуразан, Килтĕш, Актай колхозĕсенче те пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Кун пек колхозсем татах та чылай.

Халĕ колхозсем умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕри вăл—кăçалхи пысăк тухăçлă тырпулсемпе тупăшсене колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тĕрĕс валеçсе парасси пулат.

Анчах районри колхозсенче тырпулсемпе ытти тупăшсене колхозниксене-ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе парасси хăй тĕлĕн, ӳрĕк-сӳрĕкĕн пулса пырат-ха. Колхоз председателĕсемпе ревизи комиççи членĕсем тырпулсемпе тупăшсене колхозниксене хăвăртрах валеçсе парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлемеççĕ. Халĕ районри 127 колхозран 7 колхоз çеç тырпулсемпе тупăшсене валеçмели ведомоçсене районри çĕрĕç пайне пырса çирĕплеттернĕ.

Районра ку вăхăта çитсе те 18 колхозра авăн çапса пĕтермен. Панкли, Татмăш, Ильйинка, Тури Йолăш колхозĕсенче авăн çапас ĕç чăтма çук хуллен пырат. Кунта колхоз председателĕсем авăн çапса пĕтерсе тырпулсемпе ытти тупăшсене хăвăртрах валеçсе пĕтерессишĕн кĕрешмеççĕ.

Чылай колхозсенче клевер çапас ĕç чăсалса пырат. Йанкурас, Кĕреткасси, Йажуткă, Охверкин, Тени, Йеренар, Кайри Хирлеп тата ытти колхозсенче клевер çапса пĕтермен. Çапла вара авăн çапас, клевер çапас ĕçсем пĕтменнипе тырпулсемпе тупăшсене валеçесси чăсалса пырат.

Урмайри „Çуттала" колхозра таксăнах йалхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе çитерне. Çапла пулин те кунта колхоз председателĕ Нилов йулташ тупăша колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх валеçсе пама васкамаст. Вылъăх-чĕрлĕхсем валъли тырпул, утă улăм уйăрса хуман, вĕсене фермă пуçлăхĕсемпе аслă конюхсене, бригадирсене çирĕплетсе паман. Ревизи тумаççĕ. Ревком председателĕ Кустарин ревизи тăвас ĕçе пуçармаст.

Кун пек ĕçлесе пырассине тĕппипех пĕтермеле. Колхозсенче тырпулсемпе тупăшсене хăвăртрах валеçсе пĕтермеле.

Ф. Филиппов.

* * *

ВĂРНАР (хамăр корр.). Районри колхозсенче колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тырпул валеçсе парас ĕç чăтма çук хуллен пырат. 85 колхозран халиччен Шоркасси, Çĕнйал Нурăс, Малтикас, Йамбахтин тата Мăн Хирлеп колхозĕсем çеç валеçме тытăннă.

Райçĕрĕç пайĕпе МТСтанци йенчен çак йенĕпе татăклă йертсе пыни çук. Чылай колхозсенче авăн çапса пĕтерни 2—3 ерне çитет. Анчах колхоз счетовочĕсемпе ревизи комиççийĕсем çителĕксĕр ĕçленипе ĕç вăрăма кайса пырат. Акă Рунгăри „Малый Цивиль" колхоз кăçал пысăк тухăçлă тырпул илчĕ. Авăн çапса пĕтернĕренпе виç ерне те иртрĕ. Анчах тырпул валаçес ĕçĕ пайан куна та тытăнман. Колхозниксен ĕçкунĕсене шутласа çырса пĕтермен. Ревизи комиççи хăйĕн ĕçне тытăнман. Çакăн пекех Хирпуç колхозĕнче те правленире ĕçлекенсем тырпул валеçес ĕçе хакламаннипех ку ĕçе чăсса пыраççĕ.

Ейзенбраун.

Совет Союзĕн Геройĕ Михаил Петрович Петров Нарофомински суйлав округĕ тăрăх Союз Советне депутата суйланма баллотировкăна тăрат (Мускав облаçĕ).

Н. Кубейев фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Ĕç кайа йулат

Йетĕрнери „Дружба" колхозра халъхи вăхатра председател пулса Михайлов П. Т. ĕçлет. Михайлов председателсен курсĕнче вĕренсе тухнă пулсан та колхозри ĕçе йеркелĕ йертсе пымаст. Колхоз пайанхи куна та государствăна тырăсем парса татман, сĕт-çу, клевер вăрри парассипе те кайа йулса пырат.

Колховăн кăçалхи тупăшĕсене колхозниксене хăçан валеçсе парасси те паллă мар. Ку ĕçре бригадирсем колхозниксен ĕçкунĕсене ĕçкĕнекисем çине çырса паманни те ĕçе кайа хăварса пырат.

Колхозра руководствă йапăх пулнипе кăçал ĕне ферминче вылъăхсем те чылай вилчĕç. Çапла пулсан та „Дружба" колхоза районран килсе пулăшакансем çук.

И. Казаков.

Вулав çурчĕсем

Хĕрлĕ Чутай районĕнче 29 вулав çурчĕ. Вĕсенче вăхăта культурлă иртермели майсем ӳссех пыраççĕ. Нумай вулав çурчĕсенче патефонсем, радио, биллиардсем пур.

Колхозниксем каççерен вулав çуртне пухăнаççĕ.

пулнă.

Çичĕ уйăх хушши епĕр тулашри тĕнче çинчен нимĕн те пĕлмен. Анчах епĕр пĕр иккĕленмесĕр, пирĕн правителствă пирĕн çинчен тата пирĕн çемйесем çинчен тăрăшат, пирĕн çинчен астăват, пире çăлма кирлине пурне те тăвĕ, тесе шутланă.

Тăна çухатас мар тесе, епĕр хамăр хушăмăрта калаçнă. Пĕр-пĕр темă илсе, çавăн тăрăх аса илеттĕмĕр: советсен сйесĕсене, чукунçул транспортне, йăвăр индустрийе, çăмăл тата вăрман промышленнăçне. Апат-çимĕç промышленнăçне çеç асăнмастăмăрччĕ. Сăлтавĕ паллă.

Ийулĕн 29-мĕшĕнче кĕтмен çĕртен пирĕн камерăна икĕ нимĕç салтакĕпе офицер кĕрсе тăчĕç. Пĕр нимĕçĕ, директăра тек-текех распорйаженисем парса, хăйне хуçа пек тыткалат.

— Есĕр мĕнле кунта лекнĕ?—ыйтрĕ пирĕнтен нимĕç.—Есĕр вĕт парахода хăвăр путарнă?

Çав тери сĕмсĕр ыйтăва хирĕç, епĕ хулшуççисене пăркаласа илсе, çапла каларăм: хамăрăн теплохода хамăр мĕншĕн путарас, кам путарнине есĕр аван пĕлетĕр пулмала, терĕм.

— Есĕр мĕн тийесе кайнă?—тесе вăл çĕнĕ ыйту пачĕ.

— Ун çинчен журналта çырнă,—татса каларăм епĕ.

Вăл журнал ыйтрĕ. Кайарахпа мана тĕрме директăрĕ çав нимĕç хăварнă расписккăна кăтартрĕ. Расписка тăрăх нимĕç журнала та, мана инçете ишме панă капитан дипломне те илсе кайнă.

Пире—вуннпĕр çынтан тăракан пĕррĕмĕш ушкăна — кăштах кĕтмен çĕртен ирĕке кăларчĕç. Пăтранчăк шыв тултарнă кружкă парса ирхи „апат" çитерсĕ хыççăн, сасартăк алăк уçăлса кайрĕ те, мана тĕрме директăрĕ патне илсе кайрĕç. Куратăп, ыттисене те—ултă йе çичĕ çынна—илсе пыраççĕ. Мĕн пулнине никам та пĕлмест.

—Генералиссимус Франко сире ирĕке кăларат, — тесе пĕлтерчĕ директăр.

— Есĕр пайан... е-е... Францине кайатăр!..

Пире кăç пулас умĕн илсе кайрĕç. Темиçе пин ăшă кӳç пире ăсатрĕ. Тĕрмере ларакан темиçе пин испанец, шалти иккĕмĕш карташĕнче утса çӳрекенскерсем, пире çул пама пăрăнчĕç. Сасартăк вĕсем, тигр тапăнна чухнехи пек, айăккала сиксе ӳкрĕç.

Епĕ çавăрăнса пăхрăм. Пушанса йулнă карташ варĕнче саламат йатнă çын тăрат. Картусне хăрах йеннеле антарса лартнă. Ӳссĕрскер теме кура урса кайнă. „Санта-Мариа" директăрĕн помошникĕ иккĕне палласа илтĕм.

Тĕрмепрен тухас-чух пирĕн аллăсене каллех сăнчăрласа лартса, мăшăрăнмăшăрăн çыхса лартрĕç те, жандармсен пысăк охранипе тусанлă та чуллă çул тăрăх илсе кайрĕç.

Севилйене кайакан çул... Севилйе тĕрми... Ируна çитиччен каллех сăнчăрласа лартнă алсемпе хупă вагонра... Ирунра ывăниччен кĕтсе ларни... Чикĕри пункт коменданчĕ тата фалангиссем. Жандармсем пире çав çынсен аллине пачĕç...

Халĕ, епĕр ĕнтĕ тăван çĕршывра чухне, хамăр тавра тăван та савăнăçлă пит-куçсене курса тăнă чухне, сана пур çĕрте те туслăн кĕтсе илсе ал пама васкапă чухне, тыткăнри йулашки ерне хăрушă тĕлĕкĕн вĕçĕ пек туйăнса кайат.

Анчах çук, тĕлĕк мар вăл. Социалисăмăн хăватлă çĕршывĕ хăйĕн ывăлĕсене фашисăм йатлă тискер кайăкăн вăрăм чĕрнелĕ урисенчен çирĕп алпа туртса кăларчĕ. Пирĕн тĕлĕнмеле тăван çĕршыв пулас мар тăк, епĕр илемлĕ „Комсомолпа" пĕрле тахçанах тинĕс тĕпĕнче выртнă пулĕччĕ.

Епĕр ăна нихçан та манас çук. Фашиссен урса кайнă банди тупăсенчен пенипе вăл мĕнле путнине нихçан та манас çук. Çитĕ кун,—вĕсем вара счота пĕтĕмпех тавăрса парĕç, çавна кашни кун, кашни сехет вĕсене валъли истори хатĕрлет!

Одессă.

(„Правда", ноябрĕн 23-мĕшĕ).

А. Йурин

Чиркӳ çыннисем тата сектантсем фашисăм службинче

I.

Чиркӳ çыннисен тата сектантсен руководителĕсем контрреволюцилĕ ĕçсем туса тăнине ĕççыннисем, вăл шутрах ĕненекенсем те, нумайĕшĕ пĕлмеççĕ. Контрреволюцилĕ шухăшлă чиркӳ çыннисем совет власне хирĕç кĕрешме тĕрлĕрен майсемпе хăтланнине ĕççыннисем татах та сахалрах пĕлеççĕ.

Вырăс чиркӳвĕн историйĕ, вăл—тăтăшах ĕççыннисене хирĕç кĕрешсе пыни пулса тăрат. Чиркӳ, революцилĕ йухăмпа тата обществă малала туртăнса пуçаракан пур ĕçсемпе те кĕрешсе пырса, кĕрешӳн тĕрлĕрен майĕсене йĕркеренех туса хунă. Чиркӳн кĕрешӳ мелĕсен хисепĕнче — тĕрлĕрен елексем сарассинчен пуçласа, террор, диверçи тата хăратса улталасси таранах пур.

Чиркӳсемпе сектантсен руководителĕсем, хăйсене тăрă шыв çине кăларасран хăраса, контрреволюцилĕ ĕçсене, йалан пекех, уççăн тумаççĕ. Вĕсем хăйсен йĕрĕнчĕкле сăн-питне пытарса, хăйсен агенчĕсем урлă „ĕçлеççĕ". Вĕсен агенчĕсем „турă старикĕсем", „светуйсем", „асап тӳснĕ" çынсем пек пулса, тата ытти майлă та контрреволюцилле ĕçсем туса çӳреççĕ.

Чиркӳсемпе сектантсен руководителĕсем пит час-час фашисла йутçĕршывсен разведкисемпе çыхăнаççĕ, вĕсем патне службăна кĕреççĕ, троцкиссемпе, бухаринçăсемпе тата ытти своăлчсемпе аллаллăн ĕçлеççĕ.

Митрополитсем, йепископсем, попсем, сектантсен проповедникĕсем „чухăнсене хĕрхенетпĕр" тенĕ сăлтавпа укçа йе урăх мĕн те пулин парса, хăйсен ултавĕн талатине çаклатнă ĕненекенсене шпионла, террорла ĕçе хутшăнтарма хăтланаççĕ. Вĕсем çавăн пек майпа анлăн усă кураççĕ.

Ку тĕлĕшпе Ч. хĕрачан историйĕ пит кăтартулă. Ч. хĕрача, Атăлта çӳрекен пĕр пароход çинче ĕçленĕ чухне, 1936 çулхи çуркуннепе, хăйне-хăй философин чаплă профессăрĕ текен пĕр пассажирпа тĕл пулнă. Унпа калаçнă чухне хĕрача унăн Мускава вĕренме пит кайас килни çинчен каласа панă. Ч. хĕрача унăн столицăра вĕсем патне кĕмели паллакан çынсем çуккипе çеç вĕренме кайма чарăнса тăнă. „Профессор" хĕрачана хĕрхеннĕ пек пулнă, ăна Мускава пыма чĕннĕ, хамăн паллакансем патне—лайăх çынсем патне вырнаçтаратăп, тенĕ.

Шанчăкпа хавхаланнă Ч. хĕрача тепĕр уйăхран Мускава пынă. Ăна вокзалра „профессорăн" пит йăрă ассистенткисем тĕл пулса илнĕ. Вĕсем „профессор" йачĕпе хĕрачана 400 тенкĕ укçа панă та хватере илсе кайнă.

Ассистенткăсем Ч. хĕрачапа пит вашават пулнă. Вĕсем: „профессор" саншăн тăрăшат, вăл çапла пулмала та, мĕншĕн тесен, „профессор" халъхи çамрăксене калама çук йуратат, вăл çамрăксемшĕн тем тума та хатĕр тесе, темиçе хут калана.

Ч. хĕрача майĕпенех „профессорпа" çывăх çын пулса тăнă, ун патне хăй килне кĕнĕ пекех кĕрсе çӳреме пуçланă. Айван тата çынна çăмăл шанакан хĕрача „профессор" хушакан ĕçсене туса пыма тытăннă: унăн паллакан çынĕсем патне çырусем леççе панă, „профессор" каласа пыни тăрăх унăн тусĕсем патне вăл шутрах йут патшалăхра пурăнакансем патне те, çырусем çырнă.

Вăхăт нумай та иртмен, „профессора" тăрă шыв çине кăларса арĕсленĕ. Вăл Д. йепископ, православнăй чиркӳ ĕçĕнчи паллă çын, пулнă мĕн. Çак çын—йепископ, шпион, Гестапо заданийĕ тăрăх, шпионла-террорла организаци валъли кадрсем хатĕрленĕ. Д. патĕнче 200.000 тенкĕ ытла укçа тупнă. Çав укçана вăл ĕненекенсене, вĕсен укçи ун пек çĕре кайни çинчен шухăшламан та çынсене, улталаса пухнă.

Тĕне ĕненекенсен айванлăхĕпе усă курса улталаса, çав айванлăхсене чĕртсе пырса, Д. йепископ тĕне ĕненекенсене террорисла ĕçе хутшăнтарма хăтланнă. Д. йепископ контрреволюцилĕ ĕç тĕлĕшпе хăйĕн çывăх помошникĕсене—айванрах çынсене, вĕсене совет государствин руководителĕсене хирĕç террорисла актсем тутарма май пултăр тесе, танатана çаклатма вĕрентнĕ. Д. хăйпе пĕрле пулнисене йатарласах çапла вĕрентнĕ: пире тытсан, чиркӳ тата епĕ ку ĕçпе çыхланман пек йулмала пултăр, тенĕ.

Çĕнелнĕ чиркӳ текен йе „чĕрĕ" чиркӳ („живая церковь") текеннин руководителĕсенчен пĕри Б. йепископ та çавăн пекех ирсĕр контрреволюцилĕ ĕçсем туса пынă. Б. йепископ 1934 çултанпа фашисла çĕршывсенчен пĕрин разведкипе çыхăнса тăнă, вăл хушнипе Уралра совета хирĕçле организаци тунă,—çав организаци диверçилĕ актсем тума хатĕрленнĕ. Вăл хăй тавра активлă чиркӳ çыннисене пуçтарнă, вĕсене совета хирĕçле пулма вĕрентнĕ. Б. йепископ хăй тавра пуçтарнă чиркӳ çыннисем çар сойединенисен кĕрешӳ хатĕрлĕхĕ çинчен шпионла сведенисем пуçтарнă. Б. хушнипе, вăл совета хирĕç организацийе кĕртнĕ чиркӳ çынни С. артиллери складне, ăна сиктерсе йама, ĕçе кĕме пултарнă. Б. йепископăн фашисла разведкăри хуçисем унăн предателле ĕçĕшĕн хаклă тӳленĕ, йепископ-шпион ыйтнипе ăна валъли йутçĕршыври пĕр банкра текущи счот уçса панă.

Тихоновла чиркӳ йепископĕ Т.—хăй ăна тăрă шыв çине кăларнă—Сĕнĕрте чиркӳ çыннисенчен совета хирĕçле ушкăн тунă. Çав ушкăнăн тĕп задачи — шпионла ĕçсем тăвасси тата промышленнăç предприйатисенче диверçилĕ актсем тума хатĕрлесси пулнă. Т. йепископ хăй улталанă айван çынсене: „епĕ турă ĕçне тăватăп", тесе вĕрентнĕ.

Çав ирсĕр çыннăн биографийĕ тăршшипех ирсĕр. Граждăн вăрçи çулĕсенче вăл шурă çар контрразведкин агенчĕ пулса ĕçленĕ. Вăл пĕлтернипе рабочисене—Семенова, Непомнйащчийе тата ыттисене те арĕслесе персе вĕлернĕ. Хĕрлĕ çар чаçĕсем çитсе кĕрсен, Т. пытанса пит вăрттăн ĕçлеме тытăннă, вăл, тыла аркантарас та, йапонçăсене валъли тапăнса пыма май туса парас тесе, шурăгвардилле елементсемпе çыхăну тунă.

Йулашки çулсенче Т. йутçĕршыв разведкин службине кӳснă, унăн заданийĕ тăрăх шпионла ĕçсем туса пынă.

Савăнтах, Сĕнĕрте, православнăй чиркӳн тепĕр йепископĕ—З. тенĕскер тата унпа пĕрле пулнăскерсем—активлă чиркӳ çыннисем Д. тата А.—шурă емигрантсен Харбинри „братство русской правды" текен организацийĕпе тата йутçĕршыв разведкипе çыхăнса тăнă.

З. йепископ, хăй майлă çавăрнă чиркӳ çынни, провокатор тата колчаковец П. урлă, „братство русской правды" текен организаци тата йутçĕршыв разведки хушнипе чылай шахтăсенче диверçилĕ ушкăнсем тунă.

Чиркӳ çыннисем Украинăра та шпионла ĕçсене пит активлă сарса йанă.

Унта чиркӳ çыннисен йертсе пыракан активĕнчен тăнă фашисла ушкăна тупса тытнă („автокефальное течение" текенскерсем пулнă),—çав ушкăнра йутçĕршыв разведкисен икĕ агенчĕ тăнă. Çав ушкăна йертсе пынă митрополитсемпе йепископсем фашисла программă хатĕрленĕ,—вĕсен программи тăрăх—Германи хӳттипе „хăй тĕллĕн пурнакан Украинă государствине" тумала тата капи-

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тăшмансем совет сучĕ умĕнче

Суд дневникĕ

Нойабĕрĕн 29-мĕш

Нойабĕрĕн 29-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Шупашкар хулинче, Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариатĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сăтăр туса пурăннă контрреволюцилĕ сăтăрçăсене суд тума пуçларĕç. Айăпланакансен тенкелĕ çинче лараççĕ: М. Ф. Спиридонов, Д. Т. Павлов, А. П. Шулов, В. И. Зайков, А. Т. Михопаркин, К. И. Орлов, Т. С. Суриков, М. И. Семйагин лараççĕ.

Ĕçе Чăваш АССР Аслă сучĕн Специальнăй Коллегийĕ судăн уçă ларувĕнче пăхса тухать, суд председателĕ Семенов йулташ. Специальнăй Коллегин членĕсем—Алмазов тата Савушкина йулташсем.

Судра государствă йенчен айăплаканĕ—Чăваш АССР прокурорĕ Елифанов йулташ.

Айăпланакансене хÿтлекен зашчитниксем— зашчитниксен коллективĕн членĕсем: Николайев, Шорин, Алексейев, Измайлов, Милинский тата Малов йулташсем.

* * *

Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариатĕнче йава çавăрнă тăшмансем республикăра социалисăмла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе нумай сăтар туса пурăннă. Çĕрĕç халăх комиссарĕн заместителĕ—аратлă выльăх-чĕрлĕх зоотехникĕ пулнă Матвей Филиппович Спиридонов, Çĕрĕç халăх комиссариачĕн выльăх-чĕрлĕх Управленин начальникĕ пулнă Дмитрий Трофимович Павлов, Çĕрĕç халăх комиссариачĕн Племзаготконтора Управленин начальникĕ пулнă Александр Петрович Шулов, Çĕрĕç халăх комиссариачĕн зоотехникĕ пулнă Василий Иванович Зайков, Çĕрĕç халăх комиссариачĕн Ветеринари Управленин начальникĕ пулнă Александр Тимофейевич Михопаркин, Сĕнтĕрвăрри районĕнче ветеринари врачĕ пулнă Константин Иванович Орлов, Çĕрĕç халăх комиссариачĕн зоотехникĕ пулнă Тимофей Сергейевич Суриков, Тутаркас районĕнче ветеринари врачĕ пулнă Михаил Иванович Семйагин—çак етемсем пурте совет государстви çине, колхоз строителстви çине тăшманла пăхса, Çĕрĕç халăх комиссариат системин выранĕсенчи сыпăкĕсенче совета хирĕçле елементсене хăйсем майлă çаварса, республикăра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тата колхоз стройне аркатассине тĕп задачă вырăнне хурса, сăтăрлă ĕç туса пынă.

Выльăх-чĕрлĕх Управлени йенĕпе сăтăрлă ĕçе çакăн пек туса пынă: колхозсенче ăратлă выльăхсен тĕрлĕрен йăхĕсене хутшăнтарса йарса ăратлантарас ĕçе арпаштарса пĕтернĕ, уйрăм ăратсене районсем тăрăх валеçес плана пурнăçа кĕртессине арката пынă, чирлĕ выльăхсем кÿрсе килнĕ, ăратлă сысна сем тесе ахаль сыснасем илсе килнĕ. Выльăх-чĕрлĕх вĕлерсе пĕтермелли условисем туса хурас тĕллевпе, çав çынсем выльăх апачĕн никĕсне çулран çулах сахал планланă, вăл план выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планран пачах уйăрăлса кайнă.

Çĕрĕç халăх комиссариачĕн Ветеринари управленийĕ йенĕпе сăтăрлă ĕç, Михопаркин йертсе пынипе, хăйсен умне выльăх-чĕрлĕх шутне сахаллатас, йерекен чирсене йурийех сарса колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх хисепне чакарас, йерекен чирсемпе чирленĕ ăратлă выльăхсене пĕлетĕркачах колхозсене валеçсе панипе выльăхсене массăллăн вĕлерсе пĕтерес, час сÿрелмен епизотилĕ чирсен киве йăвисене сыхласа усрас, бактериологилĕ лабораторлă ĕçе аркатса йарас, выльăх сырйо продуктисене чирлĕ выльăхсен инфекцине

* * *

Суд ларувĕн залĕ халăхпа тулса ларнă.

Аслă Судăн Специальнăй Коллегийĕ председателĕ Семенов йулташ суд составĕпе зашчитниксен составне пĕлтерет, айăпланакансенчен вĕсене айăпласа çырнине панине йытса пĕлет, çавăн пекех свиделĕсем килнипе килменинĕ тĕрĕслет.

* * *

Председателĕ суд ларувĕ декабĕрĕн 1-мĕшчен перерыв туни çинчен пĕлтерет.

Декабĕрĕн 1-мĕш, кăнтăрлахи лару

11 сехетре кăнтăрла суд ларувĕ уçăлать. Залра пайан та халăх тулли йех. Председател Семенов йулташ айăпласа çырнине вуласа парать.

* * *

йертес, йерекен хăрушă чирсене выльăхсемпе çынсем хушшинче нумайăн сармали условисем тăвас задачă ларнă.

Айăпланакан Матвей Филиппович Спиридонов, 1917 çулта духовнăй семинарийĕнчен вĕренсе тухнăскер, 1917 çулхи февраль революцийĕнчен пуçласа Колчак çарне тагăкланах çемĕрсе тăкиччĕнех, контрреволюцилĕ правителствăра чылай ответлă вырăнсенче ĕçленĕ тата рабочи класа хирĕç, революцине хирĕç активлăн кĕрешнĕ. 1917 çулта вăл буржуалă национализсен ушкăнне тата ес-ерсен партине кĕнĕ, 1918 çулхи август уйăхĕнчен пуçласа 1919 çулхи нойабĕрĕн 20-мĕшне çитиччен, урăхла каласан—Колчака çĕмĕрсе тăкиччен, шуррисен çарĕнче Хĕрлĕ Çара хирĕç çапăçнă. 1918 çулхи йанвар уйăхĕнче Хусанта ес-ерсем пухна пĕтĕм чăвашсен контрреволюцилĕ çар сйесне хутшăнса ĕçленĕ, вăл сйес Советсене хăваласа салатма тата уйес совечĕн председателне—Кадыков большевика арĕслеме Шупашкара отрйад йанă.

Граждăн вăрçи хыççăн Спиридонов, влаçăн вырăнти органĕсен руководителĕсен политикалă тимсерлĕхĕпе усă курса, Чăваш республикенче чылай государствă учреждениенче йертсе пырас ĕçе кĕрсе кайма пултарнă.

Хусанта ветеринарипе зоотехника институчĕнче вĕреннĕ чухне тата Хусанта йалхуçалăх институтĕнче аспирант пулса ĕçленĕ чух не Кудрйавцев, Фомин тата Винтайкăн троцкиссемпе (халĕ арĕсленĕ халăх тăшманĕсемпе) çыхану тытнă. Спиридонов Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариачĕн заместителĕ пулса ĕçлеме кÿçсан, Винтайкина, партирен те ĕçрен те кăларнине пĕлетĕркачах, тата Сурикова, уççăнах контрреволюцилĕ агитаци сарнăшăн комсомолтан та Горькинчи йалхуçалăх институтĕнчен те кăларса парахнине пĕлетĕркачах, малашне те контрреволюцилĕ ĕç туса пырас тесе, 1935 çулта иккĕшне те хăйĕн патне Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариатне ĕçлеме илнĕ.

Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариатĕнче ĕçленĕ вăхăтра Спиридонов, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сăтăрлама контрреволюцилĕ ушкăн тунă, унта çак çынсем тăнă: Винтайкин—Хусан хулинче контрреволюцилĕ ĕçсем тунăшăн халь ăна Тутар АССР Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕ тытса арĕсленĕ, урăх ĕç пирки айăплаççĕ; А. П. Шулов—прапорщик пулнăскер, шывман хуçи, лесопромышленник, бакалей таварĕсемпе услам тăвакан ывăлĕ; А. Т. Михопаркин—кивĕ çарта подпоручик пулнăскер, сутăç ывăлĕ; Суриков—троцкис; Д. Т. Павлов, Зайков т. ыт.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тăшмансене çакăн пек сăтăрлă ĕçсем тунăшăн айăплаççĕ:

1) СПИРИДОНОВ—выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен правителствăн йышăннă плансене пăхмасăрах, колхоз фермисене валли чылай начар йăхлă ăратлă такасем кÿрсе килме план тунă.

Вăл такасене пĕр хуçалăхра темиçе тĕрле йăх пулмала туса валеçнĕ. Кÿрсе килнĕ чирлĕ выльăхсене ветеринари санитарийĕ йенчен пăхмасăрах салатнă, çапла тунипе чылай колхозсен выльăх кĕтÿвĕсене йерекен хăрушă чирсемпе чирлеттернĕ. Сыснасемпе сурăхсене метизаци тăвассине арканас тĕллевпе, фермăсемпе опытлă станцисене çуралакан ăратлă çамрак выльăхсене план тăрăх валеçессине çулсеренех пурнăçа кĕртмен. Выльăх апачĕн никĕсне тăвассине сахалрах планланă, вăл план выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес планран уйăрăлса кайнă, çапла тунипе выльăхсене вĕлерсе пĕтермели условисем туса хунă. Чăх-чĕп фермисене пĕтерсе лартмали условисем тунă. Сурăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерес ĕçе ăратлă такасем мĕн чухлĕ пуррине шута илмесĕр планланă. Литваран кÿрсе килнĕ сыснасем ăратсăр сыснасем пулнине, вĕсене беккон фабрикĕнчен таварлă сыснасен шучĕпе илнине лайăх пĕлнĕ пулсан та, вĕсене ăратлă сыснасем тесе валеçнĕ тата вĕсене кÿнĕ çемĕн, таварлă сысна фермисенче лайăхлатнă сыснасен хисепĕ чакса пынă. Догавăр тăрăх тума илнĕ 11.200 тенкĕлĕх ĕçе Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариачĕн аппаратне тÿлевсĕрех тутарттарнă, çав вăхăтрах вăл ĕçе, хăй йышăнса тăракан должнаç тăрăх, Спиридоновăн хăйĕн тумалла пулнă. Спиридонов çак мĕн пур сăтăрлă ĕçе Цилько, Фомин, Кудрйавцев, Винтайкин тата Суриков троцкиссемпе таччăн çыхăнса туса пынă, тата Винтайкинпа Сурикова хăй патне ĕçе илнĕ.

2) ПАВЛОВ — колхозсенчи таварлă фермăсем валли, Чăваш АССР правителстви кăтартнă пек мар, чылай начар йăхлă ăратлă такасем кÿрсе килнĕ. Вăл такасене пĕр хуçалăхра темиçе тĕрле йăх пулмала туса валеçнĕ. Кÿрсе килнĕ чирлĕ выльăхсене ветеринари санитарийĕ йенчен пăхмасăрах салатнă, çапла тунипе чылай колхозсен выльăх кĕтÿвĕсене йерекен хăрушă чирсемпе чирлеттернĕ. Сыснасемпе сурăхсене метизаци тăвассине арката тĕллевпе, фермăсемпе опытлă станцинче çуралакан ăратлă çамрак выльăхсене план тăрăх валеçессине çулсерен пурнăçа кĕртмен. Выльăх апачĕн никĕсне тăвассине сахалрах планланă, вăл план выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес планран уйăрăлса кайнă, çапла тунипе выльăхсене вĕлерсе пĕтерме условисем туса хунă. Чăх-чĕп фермисене пĕтерсе лартмали условисем тунă. Литваран кÿрсе килнĕ сыснасем ăратсăррисем пулнине, вĕсене беккон фабрикĕнчен таварлă сыснасен шучĕпе илнине лайăх пĕлнĕ пулсан та, вĕсене ăратлă сыснасем тесе валеçнĕ тата вĕсене кÿрсе килнĕ çемĕн таварлă сысна фермисенче лайăхлатнă сыснасен хисепĕ чакса пынă. Халăх тăшманне, Спиридонова, догăвăр тăрăх илнĕ ĕçе туса пама выльăх-чĕрлĕх управленин аппаратне тÿлевсĕр ĕçлеттерме май туса панă. Çак пĕтĕм сăтăрлă ĕçе Цилько, Винтайкин, Спиридонов, Михопаркин, Григорйев т. ыт. троцкиссемпе таччăн çыхăнса туса пынă.

3) ШУЛОВ—колхозри фермăсем валли, Чăваш АССР правителстви йышăннă пек мар, чылай начар йăхлă такасем кÿрсе килнĕ. Çав такасене пĕр хуçалăхра темиçе тĕрлĕ йăх пулмала туса валеçнĕ. Кÿрсе килнĕ чирлĕ выльăхсене ветеринари санитарийĕ йенчен пăхмасăрах салатнă, çапла тунипе чылай колхозсен выльăх кĕтÿвĕсене йерекен хăрушă чирсем йертнĕ. Сыснасемпе енесене метизаци тăвассине арката йарас тĕллевпе, опытлă станцинче контрактаци догăварне çулсеренех пăсса пынă. Литваран кÿрсе килнĕ сыснасем ăратсăр сыснасем пулнине, вĕсене беккон фабрикĕнчен таварлă сыснасен шучĕпе туйаннине лайăх пĕлнĕ çинчех, вăл сыснасене ăратлă сыснасем тесе валеçнĕ, вĕсене кÿрсе килнĕ çемĕн таварлă сысна фермисенче лайăхлатнă сыснасен хисепĕ чакса пынă. Выльăх мĕнле ăратне кăтартакан свидетелствăсене хăйĕн патĕнче тытса усранă, çапла тунипе такасене Государствăн ăратлă выльăх кĕнеки çинче тата Районри ăратлă выльăх кĕнеки çинче регистраци тăвассинчен пытарса пурăннă тата колхозсене государствăна ăш-какай тăратас тĕллеппе йгота пама çăр тăратса хăварнă. Чăвашплемконторăн укçа-тенкĕ çине йăлтах аркаса кайас çи патне илсе çитернĕ. Кадрсене ĕçсĕр çынсем, растратчиксем, çапкаланса çÿрекенсем хушшинчен суйласа илнĕ. Выльăхсене сыватма илнĕ спирта хăй ĕçсе пурнă.

4) СУРИКОВ—уççăнах контрреволюцилĕ агитаци сарнă. Тăвай районĕнчи Ленин йачĕпе тăракан колхозра такасене касна чух ветеринари санитари правилисене пăхмасăр, çавăн пирки халăха кÿрентернĕ, такасене массăллăн чирлеттересе пĕтернĕ.

5) ЗАЙКОВ—Дагестан республикинчен 112 пуç чирлĕ така кÿрсе килнĕ, 1.446 такана Районри ăратлă выльăх кĕнеки çине çырма йурăхлă тесе йышăннă, çав вăхăтрах унашкаллисем 520 така çес пулнă, çапла тунипе Чăвашплемконторăна 20.152 тенкĕлĕх сийен кÿнĕ.

6) МИХОПАРКИН—йерекен хăрушă чирсем сарса выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе аркатса йарас шутпа йерекен чирсемпе чирленĕ ăратлă выльăхсене кÿрсе килсе, пĕлетĕркачах темиçе çул хушши колхозсене валеçсе панă, çавăн пекех тата колхоз фермисенче выльăхсем хăрушă чирпе чирлени çинчен республикăра халăх пурăнакан нумай пунктсенче йерекен усал чир сарăлни çинчен, тата выльăхсемшĕн хăрушă та час йерекен ытти чирсем пурри çинчен пĕлнĕ пулсан та, выльăхсене сиплес ĕçе тата ветеринари ĕçне республикăра йурийех вуханторса йанă, çак чирсен йăвисене шута илмен, хăрушсăрлатман, вĕсене ÿлĕмрен çĕнĕрен вăйланса кайма тата малала сарăлса пыма сыхласа усранă, çапла тунипе выльăхсем йăланах вилнĕ тата хырăм пăрахнă; выльăхсене сиплес ĕçе аркатас тата йерекен хăрушă чирсене сарас тĕллевпе сиплемели преппаратсене памасăр тытса тăнă, карантин ĕçне аркатнă, сийен кÿрес шутпа пĕлетĕркачах йурăхсăр, сруке тухнă преппаратсем парса тăнă, çапла тунипе выльăхсене прививка тунă хыççăн тата йăвăртарах чирлеттернĕ; час йерекен хăрушă чирсемпе çынсене чирлеттерес тесе, ăш-какай продуктисене лечебницăсенче пăхса свидетелствă панă, çимĕç продуктисене ветеринарипе санитари йенчен тĕрĕслессине арката пынă, çапла майпа çынсене массăллăн чирлеттермели условисем туса хунă, сÿнĕ тирсене таса мар, хăрушă условисенче усрас тата турттарса кайас шутпа, вăл тирсене чирсенчен тасатма чăрмантарса пурăннă.

7) ОРЛОВ—Михопаркин хушнă тăрăх тата унпа пĕрле ĕçлесе, йерекен чир сарас шутпа, чирленĕ выльăхсене кĕгÿре сывă выльăхсемпе çÿретме ирек панă, çапла тунипе колхозăн сĕт-çу фермиччи выльăхсене тата колхозниксемпе йединоличниксен выльăхĕсене хăрушă чир йертнĕ; сурăхсене ытларах вĕлерсе пĕтерес тесе, сурăхсен чирĕпе кĕрешмели чи кирлĕ преппарата çулгалăк çурă хушши усă курмасăр пытарса усранă, çапла майпа сурăхсем массăллăн вилсе пĕтнĕ.

8) СЕМЙАГИН—вăл та Михопаркинпа пĕр шутлăх пулса ĕçленĕ. Вăл хăрушă чир сарас шутпа чир йăвисем çук пунктсенче чирсемпе кĕрешнĕ пек ки тунă, çав вăхăтрах чир йăвисене тĕкĕнмесĕр сыхласа хăварнă, çапла майпа районра чир çĕнĕрен сарăлса вăйланса кайма условисем туса хунă. Ăратлă такасене йышăнма тесе ăна командировкăна йарсан, вăл районран тухса кайнă та, такасене йышăнвă çĕре çитмен, çапла вара районри колхозсем валли ăратлă такасем туйанас ĕçе арката йанă, контрреволюцилĕ агитаци сарнă.

Спиридонов, Павлов, Шулов, Михопаркин, Орлов тата Зайковăн айăплă ĕçĕсене Уголовнăй Кодексăн 58—7-мĕшпе 58—11-мĕш статйисем, Суриковпа Семйагинăн айăплă ĕçĕсене Уголовнăй Кодексăн 58—7-мĕш, 58—10 мĕш тата 58—11-мĕш статйисем тăрăх айăплаççĕ.

Чиркÿ çыннисем тата сектантсем фашисăм службинче

ЙУЛАШКИ

талисăма кайала тавăрмала пулнă мĕн.

Калинин облаçĕнче чиркÿ çыннисен фашисла ушкăнне тупса тытса пĕтернĕ. Вăл ушкăна П. архийепископ тата активлă чиркÿ çынни — дворйанин пулнă Ш. тунă. Унăн террорисла йачейки совет государствин руководителĕсене вĕлерме хатĕрленнĕ. Çав ушкăнра çакăн пек чиркÿ çыннисем тăнă: штабс-капитан пулнă Г., генерал-майор пулнă çын ывăлĕ М. тата патша çарĕнче капитан пулнă П.

Чиркÿ çыннисен Воронеж облаçĕнче ĕçленĕ совета хирĕçле ушкăнĕн руководителĕ З. йепископ йатарласах инструкци пекки çырнă. Çавăнта вăл хăй хыççăн пыракансене террор тума пилленĕ,—террор вăл чиркÿ совет влаçĕпе кĕрешмели формăсенчен пĕри пулать, тенĕ. Тĕне ĕненекенсене вĕрентнинче вăл çапла çырнă: „Чиркÿ, хăй туса пыракан кĕрешÿре, Христос заповечĕ тăрăх, çар хĕçпăшалĕпе çапăçма тивĕçлĕ. Турă хĕçне йун йухтарма чарса тăракан—ылханăл", тенĕ.

Челйабинск облаçĕнче Уваров попа преступлени тунă çĕртех тытнă. Вăл йапони разведки хушнипе диверсилĕ ушкăн тунă. Çав ушкăн МТС мастерскойĕсенчен пĕрне вут хыптарнă.

Троцкиссемпе тата бухаринцăсемпе пĕрле, çав бандитсемпе тата Германи фашисăмне тара кĕрĕшнĕскерсемпе пĕрле, попсемпе активлă чиркÿ çыннисем рабочисене, ĕçсыннисене тата вĕсен ачисене нумайăн вĕлерес тесе диверсилĕ актсем тăваççĕ.

Пĕлтĕрхи çул Краснойарск крайĕнче чиркÿ çынни П. тата поп ывăлĕ К., колхоз строителствине чăрмантарма хăтлапни темиçе хут та ăнăççăр пулнă хыççăн, Евенксен нацилĕ округĕнчи пĕр шкула вут хыптарнă. Шкула ачасене вĕрентнĕ вăхăтра вут тивретсе йанă. Усал çынсем шкул ачисем ан çăлăнса йулччĕр тесе пурне те тунă: шкул алăкĕсене хирсе хурса пĕренесем купаланă, шкула тăватă йенчен вут хыптарнă. Çав тери ирсĕр тата тискер преступленийĕ пула 20 ача вутра çунса кайнă.

(„Известия").

Машинсем йур айĕнче

Вăрмарти машинă-тракторлă станци сарайсене вăхăтра туса пĕтермен пирки, халĕ йалхуçалăх машинисем йур айĕнчех лараççĕ. Плугсене тасатман.

МТС директорĕ Тагачин йулташ: машинсене йусасан тин пустатпăр, тет.

Комбайнсене лартма сарай тума тытăннă. Анчах туса пĕтерме вас камаççĕ. Материал çителĕксĕр. Молотилкăсем çемрĕк.

В. Вишневский.

Техникумри политикалă информаци

Сентервăрринчи вăрман техникумĕнче уроксем хыççăн 30 минут хушши политикалă информаци туса ирттереççĕ.

Н. Архипов.

ТЕМТЕПĔР

Вăрах йанăракан пластинкăсем

Ленинградри радиокомитетра вăрах йанăракан пластинкăсем тума пуçланă: ку пластинкăсене радиопа калама йатарласа тăваççĕ. Кун пек пластинкăн пĕр йенĕ 8 минут, пысăкрах пулсан чĕрĕк сехет каласа тăрать. Халиччен çакнашкал пластинкăсем Америкăра çеç пулнă.

Вăрах йанăракан пластинкăсемпе малашне патефон çинче те усă курма пулать. Ăна тăвас тесен патефон çатмине майĕпе, вăрăнмала тăвас пулать (хальхи вăхăтра минутра 78 хут çаврăннă вырăнне $33\frac{1}{2}$ хут çаврăнмала).

(„Ленинградская Правда").

Чăпар пăлансем

Российăри Тĕпĕçтăвком президиумĕ çумĕнчи заповедник комитечĕ хаклă йышши промыслалă выльăхсене çĕнĕ районсенче ĕрчетес ĕçе тăвать. Халиччен ССР Сойузĕн Йевропăри пайĕнче чăпар пăлансем пулман, кăçал кунти районсенче ĕрчетме Инçетри хĕвелтухăçĕнчен 238 чăпар пăлан илсе килеççĕ.

Çакă вăл ССР Сойузĕн Йевропăри пайĕнчи вăрмансенче чăпар пăлан ĕрчетмели малтанхи опыт. Вĕсене кунта тĕрлĕ заповедниксене уйăрса параççĕ.

(„Тихоокеанская звезда").

Атăл айĕнчен тухакан нефтепровод

Астрахань сывăхĕнче 13 километр тăршĕне тăсăлакан çĕнĕ нефтепровод тума тытăннă. Çак нефтепровод çырман сылтăм çыранĕ хĕрĕнчен, сулахай çыранĕ хĕрне, унтан Астрахань — 2 чукунçул станци патне çитмеле. Атăл тĕпĕ тăрăх пурĕ 1200 метр тăршшĕ труба хумала. Нефтепровод тумали хăшпĕр вырăнсенче шыв тăрăнĕшĕ 18 метра çитет. Кун пек çĕрте трубасене чултан тунă йупасем çине шыв ăшнех хураççĕ. Ăшăх вырăнсенче трубасене хума 40 метр сарлакĕш траншей чавмала пулать.

Шыв айĕнчи ĕçсене ЭПРОН тăвать (шыв айĕнчи уйрăм назначенилĕ ĕçсен експедицийĕ). Експедици Атăл тĕпне тасатмали тата тарăнлатмали ĕçсене тума та тытăннă. Нефтепроводăн шыв айĕнчи пайне хĕлле, пăр çинчен тăваççĕ. Ăна пăр кайиччен туса пĕтермелĕ. Нефтепровода пĕтĕмĕшпе 1938 çулхи сентабĕрĕн 1-мĕшне туса пĕтермеле.

(„Красная Мордовия").

Ытти хулисенчи библиотекăран кĕнеке илсе вулаççĕ

Азамас районĕнчи библиотекă вулакансене лайăхрах пăхас шутпа Мускаври Ленин йачĕпе тăракан библиотекăпа, Ленинградри Салтыков-Щедрин йачĕпе тăракан библиотекăпа, ССР Сойузĕн академин библиотекипе тата Горький хулинчи Ленин йачĕпе тăракан библиотекăпа çыхăну тытать. Вулакансене, хăйсем ыйтнă кĕнекесене пĕр уйăхлăха çав библиотекăсенчен çыранса илсе параççĕ. Вулакансем мĕнле кĕнеке кирлĕ пурне те илме пултараççĕ. Кĕнекесене библиотекă шучĕпе çыранса илеççĕ. Ку вăл хăй тĕллĕн вĕренекен çынсене питĕ пысăк пулăшу парать, вĕсем пур кĕнекесене те тупса вулама пултараççĕ.

(„Горьковская Коммуна")

Вăрçăлă турăсăрсен ретне тасатмала

Сĕнтĕрвăрри районĕнче вăрçăлă турăсăрсен сойузĕн организацисем 22 шутланаççĕ, вĕсенче членра 743 çын тăрать. Анчах та çак нумай йышлă организаци тĕне хирĕçле агитаципе пропагандă ĕçне кирлĕ пек туса пыраймасть.

Аслă Совета суйламали кун çывхарса килнĕ май, район центрĕнче те, йалсенче те попсемпе сектантсем пуçĕсене çĕклеме пуçларĕç. Чиркÿпе çыхăннă елементсем халăх хушшинче контрреволюцилĕ шуйăшсем сарма пăхаççĕ.

Кун çинчен Кĕчкей, Вăта-Упакасси, Шуршăл йалĕсенче пулса иртнĕ ĕçсем те витĕмлĕн кăтартса параççĕ. Çак йалсенче пупсем çĕнĕ Конституцине пăсса, хăйсем майлă ăнлантарса çÿреме тытăннă. Тата турра ĕненекенсене ĕненменнисенчен уйăрса, Аслă Совета суйлама попсенчен кандидат палăртма хыпанса çÿрене. Услă Пукаш йалĕнче чиркÿ çыннисем Е. Казаков комсомолеца хăйсен йенне çавăрнă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнче тĕне хирĕçле пропагандă ĕçне йапăхтарни вăл йăлтах районри вăрçăлă турăсăрсен Советĕнче чиркÿ çыннисем—тăшмансем ĕçлениччен килет. Вăрçăлă турăсăрсен райсоветĕнче пĕр çул хушши ĕнтĕ Кĕчкей чиркĕвĕнче тийечук пулса пурăннă Д. Никитин председател пулса ĕçлет. Вăл унта тĕне хирĕçле мар, хăй тĕн ĕçне вăйлатассишĕн ĕçлеме тытăннă.

В. Васильев.

ХРОНИКА

** Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ А. П. Куçмина Сойуз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Улатăр суйлав Округ №-366 комиçси председателĕ ĕçĕнчен хăтарнă.

** Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ П. М. Ростова Националнăççен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар йал суйлав Округ № 497 комиçси членĕ ĕçĕсенчен хăтарнă.

** Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Д. А. Андрейев йулташа Сойуз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Улатăр суйлав округ № 366 комиçси председателне çирĕплетнĕ.

** Чăваш АССР Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп комитечĕн президиумĕ В. Т. Иванова Националнăççен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар суйлав округ №-436 суйлав комиçси председателĕн заместителĕ ĕçĕсенчен хăтарнă.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Националнăççен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АСС Республикинчи Суйлав Комиççийĕ

ПĔЛТЕРНИ

Националнăççен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АСС Республикинчи Суйлав Комиççийĕн адресĕ çапла:

Шупашкар хули, Чувашскайа урам, 6-мĕш № çурт (Ĕçтăвакан Тĕп Комитетпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕн çурчĕ).

ТЕЛЕФОНСЕМ:

Председателĕн—6—59, 5—31 тата 5—24.

Секретарĕн—5—24 тата 0—02.

Ответлă исполнителсен—0—66 тата 0—55.

Чуварлейри санаторине **квалификацилĕ медсестрасем** тата санатори условийĕсенче физкультурă ĕçне пĕлсе тăракан **КУЛЬТРАБОТНИК КИРЛĔ**

Ĕçукçине 1935 çулхи мартăн 4-мĕшĕнче йышăннă саккун тăрăх тÿлеççĕ, тата коммуналă услугă пулать.

3—2 ДИРЕКЦИ.

Шупашкарти спирт заводне

Иуристконсульт
Счетовод-картотетчик
Бухгалтер

КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх. Аслă бухгалтер патне пымала.

ДИРЕКЦИ.

2—2

СОЙУЗОРГУЧОТĂН

Горькинчи учотпа економикăлă вĕренÿ комбиначĕн

Чăваш республикинчи филиалĕ

(адресĕ: Шупашкар хули, Канаш урамĕ, 18)

БУХГАЛТЕРСЕН КУРСНЕ

вĕренме илесси çинчен пĕлтерет, курсра производствăран татăлса вĕренмеле, вĕренсе тухнă хыççăн Чăваш АСС Республикинчи районсенчи хуçалăхлă организацисенче ĕçлеме каяççĕ.

Курса çичĕ çултан кайа мар вĕреннисене тата счетоводствăн двойной системи тăрăх пĕр çултан кайа мар ĕçленисене илеççĕ.

Курса вĕренме кĕрес текенсен 1937 çулхи декабĕрĕн 20-мĕшчен çакăн пек документсем тăратмала:

1. Анкетăпа зайавлени.
2. Вĕренни çинчен справкă.
3. Счетоводствăпа ĕçленĕ стаж çинчен справкă.
4. Сывлăх çинчен справкă.
5. Икĕ фото картăчкă.
6. 20 пуслăх икĕ почтă марки.

Курсра вĕренме суйласа илнĕ çынсене уйрăммăн пĕлтерсе Шупашкар хулине чĕнеççĕ, унта çичĕ çул вĕренмели шкул программипе политграмăтă, математикă тата вырăс чĕлхи тăрăх, çавăн пекех бухгалтĕрла учот никĕсĕсем тăрăх испытанисем тытмала.

Курсра вĕренме илнĕ çынсене общежити тата стипенди пулать.

Кунсăр пуçне тата учот работникĕсем: бухгалтерсем, счетоводсем, статистиксем хатĕрлес, вĕсен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе курссемпе семинарсем ирттерме хуçалăхлă организацисенчен зайавкăсем йышăнать.

3—1

„Чăваш Коммунĕ" çыранса илмелли хакĕсем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 946. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2870. Тираж 10664. 56—92 см. 1—1 п. л.